Библиотека им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Февраль 7 ШĂМАТКУН № 26 (8935)

35-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа массăллă спорт ăмăртăвĕсем (1 стр.).
Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем (2 стр.).
Ю. Илюхин.—Сталинла преми лауреачĕ (2 стр.).
Суйлав умĕнхи агитациллĕ-массăллă ĕç. Редакцине килнĕ çырусем тăрăх (2 стр.).
Хирургсен канашлăвĕ (2 стр.).
Р. Осанов.—Пуçă çаврăнăшĕ тăвас тĕлĕшпе МТС-сен ытларах тăрăшмалла (3 стр.).
Стихван Шавлы.—Çамрăк авторсем (3 стр.).
Е. Афанасьев.—Заем укçине хăвăртрах пухса пĕтермелле (3 стр.).
М. Ботвинник—ССР Союзĕн шахмат чемпионĕ (4 стр.).
Н. Минин.—Кĕнеке почтăпа каять (4 стр.).
Гоби пушхирĕнчи çĕнĕ хула (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корея Халăх çарĕ 5 çул тултарас умĕн (4 стр.).
Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Совечĕн сессийĕ усăлнă (4 стр.).
США-ри Коммунистсен партийĕн 13 руководителĕ тĕлĕшпе йышăннă приговор (4 стр.).

ТРАКТОРСЕМПЕ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ХĂВĂРТРАХ ЮСАМАЛЛА

Колхозлă ялсенчи ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, Ленин — Сталин партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисемпе, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕпе хавхаланса, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана вăхăтра тултарас, Тăван çĕршывăн хăватне малалла ÿстерес тесе хавасланса ĕçлеççĕ. Ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна пурнăçлассишĕн — мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерессишĕн, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне хăпартассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Ялхуçалăхĕн тĕп задачине пурнăçлас ĕçре механизаторсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Кăçал пирĕн республикăра, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, тракторсемпе 33,3 процент нумайрах ĕç тумалла. МТС-сен тракторĕсемпе тата ытти машинисемпе лайăх усă курни ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăртрах туса ирттерме, тырпул тухăçлăхне, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме май парать.

Кашни МТС-ра усă курман резервсем нумай-ха. Иртнĕ çулта кашни тракторист ĕç нормине тултарнă тата пĕтĕм тракторсемпе икĕ смена ĕçленĕ пулсан, республикăри колхозсенче уй-хирти тĕп ĕçсене икĕ хут хăвăртрах туса ирттерме, МТС-семпе колхозсем договор тăрăх илнĕ обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлама май пулнă пулĕччĕ.

Тракторсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе тухăçлă ĕçлес тесен, вĕсене хĕллехи вăхăтра тĕплĕ юсамалла, уй-хирте ĕçленĕ чухне лайăх пăхмалла. Тракторсем юсавсăр пирки ĕçлемесĕр тăни пысăк сиен кÿрет. Иртнĕ çулта Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри тата ытти чылай МТС-сенче тракторсем юсавсăр пирки ĕçлемесĕр тăни 15—20 процента çитнĕ. Çав МТС-сем иртнĕ çулта тракторпа тумалли ĕçсен планне, колхозсемпе тунă договорсем тăрăх илнĕ обязательствăсене пурнăçламан.

Пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме, пур ĕçе те паха тума тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисем яланах юсавлă пулни кирлĕ. Çак чăнлăха ăнланса, Комсомольски, Сĕнтĕр, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр МТС-сенчи механизаторсем, Парачкав МТС работникĕсенчен пример илсе, тракторсемпе ытти машинăсене вырăнти Советсен суйлав кунĕ—февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Асăннă МТС-сен коллективĕсем февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсамалли плана 65—79 процент таран тултарнă. Вĕсем тракторсем юсамалли графика кашни пилĕккунлăхра тултарса пыраççĕ.

Республикăри ытти МТС-сем те, мастерскойсенчи ĕçе лайăх организациленĕ пулсан, тракторсемпе ытти машинăсене çавăн пек хăвăртлăхпа юсама пултарнă. Анчах нумай МТС-сен директорĕсем малта пыракансен опытне йышăнма тăрăшмаççĕ, мастерскойсенче юсав ĕçне тĕрĕс йĕркелемеççĕ. Çак сăлтавран килет те ĕнтĕ Хĕрлĕ Чутай, Чурачăк, Етĕрне, Советски тата ытти чылай МТС-сем юсав ĕçĕнче юлса пыни. Ку МТС-сем тракторсемпе ытти машинăсене юсамалли плана февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне 27—39 процент çеç тултарнă.

Юсав ĕçĕнче кая юлнă МТС-сен директорĕсем юсав ĕçне хăвăртлатма запаслă пайсемпе ытти япаласем çукки чăрмантарать, тесе калама юратаççĕ. Чăннипе вара кая юлнин тĕп сăлтавĕ юсав ĕçне япăх организацилени тата ĕçе япăх ертсе пыни пулать. Илĕпĕр Çĕрпÿ МТС-не. Кунта тракторсене юсассине узловой меслетпе организациленĕ пек тунă, анчах ĕçе вĕçне çитермен. МТС руководителĕсем, ĕçе йĕркелесе çитермесĕрех лăпланнă та, юсав ĕçĕнчен пăрăннă. Мастерскойра 38 çын ĕçлес вырăнне нумай вăхăт хушши 12—13 çын çеç ĕçленĕ. Январь уйăхĕнчи малтанхи икĕ эрне хушшинче юсаса кăлармалли 12 трактора, кирлĕ пайсем пурте пулнă пулин те, вăхăтра юсаса кăларман. Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри тата ытти чылай МТС-сенче те ĕç çавăн пекех.

Республикăн Ялхуçалăх министерстви МТС-сенче юсав ĕçне мĕнле организациленине çителĕксĕр тĕрĕслет, ĕçе тĕрĕс организацилеме сахал пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ республикăри вунă МТС-ра халĕ те тракторсене узловой меслетпе мар, бригадăсем тăрăх юсаççĕ. Çак пысăк çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле.

Хăшпĕр МТС-сенче тракторсемпе ытти машинăсене япăх юсани питĕ пысăк çитменлĕх пулать. Сăмахран, Çĕмĕрле тата Сурмайдан МТС-ĕсенче моторсене тĕплĕ юсамасăрах мастерскойран кăлараççĕ. Хĕрлĕ Чутайпа Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕсенче те моторсене ĕçлеттерсе пăхмасăр, горючи мĕн чухлĕ расходланине тĕрĕслемесĕр мастерскойран кăларнă. Асăннă МТС-сен директорĕсем юсанă тракторсене акт тăрăх йышăнман е йышăнас ĕçе çиелтен тунă, лайăх е япăх юсанине тĕплĕ тĕрĕслесе пăхман. Нумай МТС-сен мастерскойĕсенче ĕçлеме лайăх условисем туса паман. Вăрмарпа Канаш МТС-ĕсен мастерскойĕсенче сивĕ, тасалăх çук, ĕç нормисене йĕркелесе çитермен. Ĕçре пысăк чăрмав кÿрекен çавăн пек çитменлĕхсене халех тата пĕтĕмпех пĕтерес пулать.

Чылай МТС-сенче политикăллă-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ. МТС директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсемпе пуçламăш парторганизацисем рабочисене парти решенийĕсем çинчен, умра тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса парас ĕçе куллен-кун туса пыни кирлĕ. Социализмлă ăмăрту организацилесси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Мастерскойсенче ĕçлекен рабочисене ĕçлеме, пурăнма тата культурăллă канма лайăх условисем туса парас енĕпе те тимлĕ пулни кирлĕ. Çĕрпÿ МТС-ĕнче рабочисем валли уйăрнă общежитире тăвăр, апат пĕçерме кухня çук. Кунта хĕрлĕ кĕтес пур, анчах... тĕлĕнмелле йĕрке шухăшласа кăларнă: рабочисене, пÿлĕме вараласçĕ тесе, хĕрлĕ кĕтесе кĕртмеççĕ. Ку вăл МТС директорĕ Гурьев юлташ тата унăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Семенов юлташ рабочисен ыйтăвĕсем çине чунсăр, бюрократла пăхни çинчен калать. Кун пек çитменлĕхсем, шел пулин те, Сĕнтĕрвăрри, Сурмайдан, Вăрнар тата Калинино МТС-ĕсенче те пур-ха.

КПСС обкомĕн нумай пулмасть пулса иртнĕ пленумĕ, çуракине хатĕрленесси тата выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси çинчен сÿтсе явса, МТС-сен ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса палăртрĕ, ĕçе вăйлатмалли майсене кăтартса пачĕ. КПСС райкомĕсен обком пленумĕ йышăннă решение пурнăçлассине организацилемелле.

МТС руководителĕсемпе мĕнпур механизаторсен тракторсемпе ытти машинăсене уй-хир ĕçĕсене тума хатĕрлес ĕçе вăйлатмалла, юсамалли плана вăхăтра тата пĕтĕмпех тултарса çитерме тăрăшмалла.

Машина-трактор станцийĕсенчи работниксене умра тăракан задачăсене пурнăçлама мĕн кирлине пĕтĕмпех туса панă. Иртнĕ çулта Правительство трактористсене тата МТС-сенчи ытти работниксене ĕçшĕн тÿлемелли çĕнĕ йĕрке турĕ. Ку вăл механизаторсене вăйлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлеме хавхалантарать.

Партипе Правительство, аслă Сталин совет халăхĕн ырлăхĕшĕн куллен-кун тăрăшни çине ответлесе, ялхуçалăхĕнчи механизаторсем машинăсемпе тухăçлăрах ĕçлеме вĕренсе çитĕç, тракторсемпе мĕнпур машинăсене çуракине лайăх хатĕрлесе çитерĕç, колхозсене 1953 çулта вăйлă тырпул туса илме пулăшĕç.

Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа массăллă спорт ăмăртăвĕсем

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнă ятпа пур çĕрте те йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем пуçланнă. Ăмăртусене предприятисенчи, колхозсенчи, совхозсенчи, учрежденисенчи, шкулсенчи тата машина-трактор станцийĕсенчи Досааф пуçламăш организацийĕсен членĕсем вуншар пин çын хутшăнаççĕ. Арçынсемпе хĕрарăмсен командăсем тата уйрăм çынсем мала тухассишĕн йĕлтĕрпе 2, 3, 5, 10 тата 18 километр ăмăртса чупаççĕ.

Пĕтĕм халăх праçникĕ ячĕпе союзлă республикăсенче, крайсенче, облаçĕсенче, хуласенче тата районсенче пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пемелли массăллă ăмăртусем пулаççĕ. Ăмăртусенче пĕчĕк калибрлă винтовкăран 25 тата 50 метртан пемелле.

Çавăн пекех мотоциклистсем агитпробегсем ирттереççĕ. Автомобиль спорчĕ, юланутпа çÿремелли спорт, буер тата тинĕс-çар спорчĕ енĕпе ăмăртусем организацилеççĕ. Радист-коротковолновиксем Досаафăн чи лайăх радист-операторĕсене палăртмалли конкурсра хăйсен ăсталăхне кăтартаççĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Симĕс утрав çинче

Сталинградран тăварах, Атăлпа Ахтуба айлăмĕн тури пайĕнче, Симĕс утрав (Зеленый остров) пур. Темиçе çул каялла çак пĕчĕк утрав çинчен никамах та пĕлмен, ку таврара пурăнакансем, пулăçсем тата сунара çÿреме юратакансем çеç пĕлнĕ. Ку утрав çинчен халĕ ĕнтĕ миллионшар совет çыннисем пĕлеççĕ, кунти ĕçсене сăнаса тăраççĕ. Кунта тĕнчери чи пысăк сооруженисенчен пĕрине — Сталинградри гидроэлектростанцине тăваççĕ.

Çулталăк каялла Симĕс утрав çинче, геодези вышки патĕнче, строительсен малтанхи палаткине карса хунă. Палатка йывăççем хушшинче ларнă, ун патне çитме темиçе юханшывпа кÿлĕсем урлă каçмалла пулнă. Халĕ ĕнтĕ кунти вырăн иртнĕ вăхăтра мĕнле пулнине хăшпĕр çĕрте сыхланса юлнă юманлăх çеç аса илтерет. Пысăк улшăнусем пулнă. Утрав çинче электричество энергийĕ пырса тăмалли пысăк вольтлă линисем питĕ нумай карса хунă.

Утравăн кăнтăр енче 6 километр тăршшĕ канал чавнă. Вăл Атăла Ахтуба юханшывĕпе пĕрлештернĕ. Сталинград гидроузелĕн шлюзĕсем витĕр тухакан суднăсем çак канал тăрăх Атăла ишсе тухмалла пулать.

Халĕ канал çинче пăр шăнса ларнă, пăр юрпа витĕннĕ. Тÿрем улăх тăрăх иртсе пыракан канала питĕ кĕске срокра — çур çулталăкран та сахалрах ĕçлесе тунă. Халĕ канал айккисене чул сарса хытараççĕ. Чул тиенĕ автосамосвалсем кунĕн-çĕрĕн килсе тăраççĕ. Çамрăк инженер В. Губарев ертсе пыракан участок канал айккисене чул сарса хытарас ĕçе графикра кăтартнинчен хăвăртрах туса пырать. Участок коллективĕ канал айккисене срокчен чул сарса пĕтерме, канала çуркуннехи шыв тулнă тĕле хатĕрлесе çитерме пулнă.

Каналран çурçĕр енче строительсен поселокĕ ÿссе ларнă. Поселок патĕнчен пур еннелле те çулсем каяççĕ. Пĕр çулĕ автоматизациленĕ бетон заводне тăвакан вырăна илсе пырать. Çак завод фермисем тата питĕ пысăк резервуарсем утрав çинчи сайра вăрман урлă курăнаççĕ. Заводăн нумай цехĕсене туса пĕтернĕ. Тепĕр виçĕ уйăхран завод бетон парса тăма пуçлать.

Бетон заводĕнчен инçе мар, гидроэлектростанци плотинине пулмалли вырăнта, çĕрĕн аялти сийĕсене сăнаса пăхма шахта чаваççĕ. Геологсемпе гидрографсем кунти тăпрана питĕ тарăн, чуллă сий тухиччен чавса пăхаççĕ. Плотина никĕсне çав чуллă сий çине хумалла пулать. Шахта чавакансем 40 метр тарăнăш чавса кĕнĕ Плотина проектне тăвакансем кăларса тăратнă нумай ыйтусем çине тĕплĕ ответ тупнă. Шахта чавакансем виçĕ пин тĕлтен тăпра илнĕ, çав тăпрана лабораторисенче анализ тăваççĕ.

Симĕс утравăн хĕвеланăç енчи çыранĕнче, Воложка ятлă ансăр юханшыв патĕнче, строительствăн питĕ пысăк площадки сарăлса выртать. Кунта причал тăваççĕ. Навигаци пуçлансан Симĕс утрав çине илсе килекен питĕ нумай грузсене, пуринчен ытла оборудованипе строительство материалĕсене, çак вырăнта пушатмалла пулать.

Унтах, хĕллехи йывăр условисене пăхмасăр, Атăл хулăн пăрпа витĕннĕ пулин те, 321-мĕш номерлĕ земснаряд ĕçлет. Земснаряд экипажне Тихоненков юлташ ертсе пырать. Земснаряд кĕске вăхăтрах пысăк хăйăр тĕмине пĕтернĕ, причал пулмалли вырăна 10 метр чухлĕ тарăнлатнă. Çуркуннехи шыв тулнă вăхăт тĕлне Симĕс утрав çинчи причал ĕçе кĕрет.

Симĕс утрав питĕ пысăк строительство площадки пулса тăнă. Çуркунне çитсен тата çуллахи вăхăтра кунта ĕç уйрăмах анлăн сарăлса каять. Ун чухне Сталинград гидроэлектростанцийĕн тĕп сооруженийĕсене тума тытăнаççĕ. Çав татăклă ĕç тапхăрне хатĕрленесси вĕçленсе пырать.

А. ГРАЧЕВ.

ВОЛЖСКИЙ ПОСЕЛОКĔ (Сталинград облаçĕ).
Февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС).

Садпа пахчара ĕçлемелли тракторсем

ХАРЬКОВ, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Тракторсем пухакан завод пĕрмаях çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Икĕ çул каялла садпа пахчара ĕçлемелли «ХТЗ-7» трактор пайĕсене ытти предприятисенчен илсе килнĕ. Халĕ ĕнтĕ завод трактор пайĕсене пĕтĕмпех хăй туса хатĕрлет. Заводăн механически, термически, пресс тата ытти цехĕсем çĕнĕ станоксемпе тата агрегатсемпе пуянланнă. Поток линийĕсем 8 лини туса ĕçе янă. Иртнĕ çулта тракторсем валли 400-ре яхăн деталь тата 30 узел туса кăларма тытăннă.

Халĕ ĕнтĕ садпа пахчара ĕçлемелли тракторсене пĕтĕмпех çак заводра тунă пайсенчен пухса кăлараççĕ.

МТС-сем колхозсемпе договорсем тăваççĕ

КУРГАН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри МТС-сем 1953 çулта тракторсемпе ĕçлеме колхозсемпе договорсем тăваççĕ. Суха тăвас, акас, тĕштырăсене, пăрçа йышши тата çу тумалли культурăсене, курăксене пухса кĕртес ĕçе пĕтĕмпех механизацилеççĕ. Вĕтлĕх вăрмансене тасатас тата шурлăхлă вырăнсене типĕтес ĕçсене те договорсене кĕртеççĕ.

Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне çĕртме тунă вырăнсене çуркунне ир çÿрелессине тата кĕрхи тырăсен калчисене çÿрелессине те кĕртнĕ. Çак ĕçе туни тăпрара нÿрĕ сыхласа хăварма, кашни гектар пуçне тырпул тухăçлăхне 2—3 центнер ÿстерме пулăшать.

Механизмсемпе ĕçлесе выльăх апачĕ хатĕрлесси, турттарасси тата выльăх апатне вĕтетсе хатĕрлесси нумай ÿсет. Силос 1,5 хут нумайрах хывса хăварма йышăннă.

Долговски тата Каргаполь машина-трактор станцийĕсем договорсене выльăх-чĕрлĕх фермисене пĕтĕмпех механизацилессине, производство процесĕсене электрификацилессине кĕртнĕ. Облаçри колхозсенче йывăр ĕçсене механизацилесси икĕ хут ÿсет. МТС-сем кăçал пирвайхи хут колхозсене вăрман касса турттарса пама, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх фермисем валли хăма сурса пама тытăнаççĕ.

Облаçри МТС-сем кашни колхозра механизациленĕ итемсем тăваççĕ.

Çуртыррисем акаççĕ

САМАРКАНД, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Самарканд облаçĕнчи пур районсенче те хĕрсех çуртыррисем акаççĕ. Тĕштырăсем акакан пысăк районсенче Джизак, Фариш тата Хатырчи районĕсенче çуртыррисем 1.400—1.500-шер гектар акнă.

Мускав. Ленинла комсомол ячĕпе тăракан театрта «Полковник Фостер признает себя виновным» ятлă пьеса лартаççĕ. Пьеса авторĕ—Франци писателĕ Роже Вайян театра пырса курнă.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: писатель Роже Вайян театра артистсемпе калаçать.
В. КОШЕВОЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ХИСЕП ХĂМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх, республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

15. «Красная звезда» колхоз (председателĕ П. Яковлев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Дерягина юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ В. Карсаков юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 113 процент, турттарса кăлармалли плана 112,7 процент тултарнă.

ÇĔРПУ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

16. «Новая жизнь» колхоз (председателĕ А. Павлов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Г. Прокопьев юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ И. Илюшкин юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,3 процент, çул хĕррине илсе тухмалли плана 103 процент, турттарса кăлармалли плана 101 процент тултарнă.

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ

17. «Большевик» колхоз (председателĕ П. Ваганин юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Г. Калинин юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ И. Суворов юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 105,2 процент, çул хĕррине илсе тухмалли плана 102,2 процент, турттарса кăлармалли плана 100,8 процент тултарнă.

Малта пыракансен опычĕпе анлăн усă курар

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозри коммунистсен усă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху 1953 çулхи плана срокчен тата ирттерсе тултарасси, çĕршывра малта пыракан вăрманпромхозсен опытне сарасси çинчен сÿтсе яврĕ. Удмурт АССР-ĕнчи Сюрекси вăрманпромхоз коллективĕ йывăç хатĕрлемелли производство циклне 15 процент чакарма, оборотри укçа-тенкĕ çаврăнăшне хăвăртлатма пулса социализмлă обязательство йышăннă. Çак патриотла пуçарăва пирĕн вăрманпромхоз коллективĕ тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ.

1952 çулта вăрманпромхоз производство планне ирттерсе тултарчĕ, Тăван çĕршыва планран ирттерсе чылай йывăç хатĕрлесе пачĕ. Апла пулин те унăн усă курман резервсем, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсем нумай. 1952 çулта кадрти кашни рабочи пуçне вăтам шутпа 195 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсене тĕплĕн тишкерсе тухнă хыççăн, пуху кăçал кашни рабочи пуçне 215 кубометр хатĕрлеме йышăнчĕ. Коммунистсем тата партире тăман активистсем çавăн пекех тракторсен, электростанцисен, лебедкăсемпе крансен тата пăравуссен тухăçлăхне ÿстермелли паха сĕнÿсем пачĕç.

Пуху оборотри укçа-тенкĕ çаврăнăшне хăвăртлатма йышăнчĕ. Хамăр пултарулăхсемпе резервсене пур енчен те тарăнăн пăхса тухнă хыççăн, пуху çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе 20 пин кубометр йывăç турттарса кăларма, виçĕ миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларма, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç турттарса кăлармалли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕ. Пуху производствăна тĕрĕс йĕркелеме, кашни рабочие тухăçлă ĕçлеме пулăшакан майсем туса пама палăртрĕ. Иртнĕ çул вăрманпромхоз 69 процент ĕçе юрăхлă йывăç, 31 процент вутă хатĕрленĕ. Ĕçе комплекслă механизацилени, рабочисемпе мастерсен ăсталăхĕпе пуçарулăхĕ ÿссе пыни ĕçе юрăхлă йывăç нумайрах кăларма май парать. Çавна шута илсе, пуху кăçал ĕçе юрăхлă йывăç 72 процент кăларма пулчĕ.

1952 çулта вăрманпромхоз продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли задание пурнăçлаймарĕ, усăсăр тăкаксем чылай турĕ. Пуху планран ирттерсе 200 пин тенкĕрен кая мар государство укçа-тенкине перекетлесе хăварма пулчĕ.

Коммунистсен пуçарăвне вăрман пункчĕсенче, участоксенче, цехсенче рабочисен пĕрлехи пухăвĕсенче сÿтсе яваççĕ. Рабочисем производствăна çĕнетсе лайăхлатмалли паха сĕнÿсем нумай параççĕ.

Вăрманпромхоз коллективĕ вырăнти Советсен суйлав кунне икĕ уйăхри плана тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Вуншар рабочисем суйлав ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕç. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисемпе тата И. В. Сталин юлташăн произведенийĕсемпе хавхаланса ĕçлесе, нумай рабочисем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултараççĕ. Ăмăртăва коммунистсем пуçарса, ертсе пыраççĕ.

Кăмашка ансăр чугун çул çинчи парторганизаци секретарĕ, пăравус машинисчĕ Н. Власов юлташ иртнĕ çул нормăран ирттерсе 3.150 кубометр йывăç турттарса кăларчĕ.

Сăр тăрăхĕнчи ансăр чугун çул çинчи пуçламăш парторганизаци секретарĕн заместителĕ М. Матренин машинист пăравуса тĕпрен юсаттармасăр нормăран ирттерсе 11 пин кубометр турттарса кăларчĕ. Тăваттăмĕш кварталти нормăна вăл 122 процент тултарчĕ. Çамрăк машинист, парти членĕн кандидачĕ Н. Егоров юлташ пăравуса лайăх пăхса усрать. Вăл пĕр авари те туман, задание ăнăçлă тултарса пырать.

Коммунистсен примерĕпе çĕршер рабочисем тата колхозниксем хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Уйрăмах шоферсем паха тĕслĕх кăтартнине палăртас пулать. Ăна пула вăрманпромхоз иртнĕ уйăхри плана ирттерсе тултарчĕ. Автомашинăсемпе йывăç турттармалли плана 169 процент тултарнă.

Юлашки вăхăтра парторганизаци партиллĕ-политикăллă тата массăллă-агитациллĕ ĕçе вăйлатрĕ, социализмлă ăмăртăва лайăхрах ертсе пыма тытăнчĕ. Коммунистсем, партире тăман рабочисем çитменлĕхсене хăюллăн критиклеççĕ, паха сĕнÿсем нумай параççĕ.

Вăрманпромхоз коллективĕ, парторганизаци ертсе пынипе, йышăннă социализмлă обязательствăна чыслă пурнăçлĕ.

Т. ТАРАСОВ,
Çĕмĕрле вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

Пуçаруллă рационализатор

Йĕпреç вăрманпромхозĕнче рационализаторсен йышĕ çултан-çул ÿсет. Вĕсем производствăна çĕнетсе лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан сĕнÿсем чылай параççĕ. Уйрăмах коммунист А. Казаков слесарь-электрик паха тĕслĕхсем кăтартнине палăртас пулать. Вăл икĕ йышши пресс, икĕ станок туса хатĕрленĕ.

Ĕлĕкрех вăрманпромхоз автомашина динамине Улатăрти мастерскойра юсаттарнă. Казаков юлташ вырăнтах юсама май тупнă. Вăл автомашинăн чылай пайĕсене те юсама вĕренсе çитнĕ. Коммунист-рационализатор кăçал темиçе сĕнÿ пама пулнă.

Ăмăртăва хутшăнаççĕ

Шăхасан районĕнчи «За коммунизм» колхоз членĕсем йĕтĕн-кантăр акса тăвас ĕçре малта пыракансем техникăллă культурăсене 1953 çулта пысăк тухăçлă туса илессишĕн социализмлă ăмăрту пуçарнине хĕрÿллĕн ырлаççĕ.

1952 çулта пирĕн колхоз та кантăр акмалли плана чылай ирттерсе тултарчĕ. Планпа 13,5 гектар акмалла пулнă пулсан, эпир ăна 19,3 гектар çинче акса турăмăр. Кантăр вăрри пирĕн гектартан 5,67-шер центнер, кантăр сÿсĕ—6-шар центнер тухрĕ. Планпа пăхнинчен чылай ирттерсе государствăна кантăр вăрри, тата кантăр сÿсĕ патăмăр. Çакăншăн колхоз 59.186 тенкĕ укçан тата тулă, çу, сахăр нумай илчĕ.

Малта пыракансем чĕнсе калани çине ответлесе, пирĕн колхоз членĕсем техникăллă культурăсене кăçал пысăк тухăçлă ÿстерессишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса çакăн пек обязательствăсем йышăнчĕç: кантăра кăçал 22 гектар çине акатпăр, кашни гектартан кантăр вăрри 6-шар центнер, кантăр сÿсĕ 7-шер центнер пухса кĕртме пулатпăр, çав продукцие государствăна октябрь уйăхĕнче парса татма сăмах паратпăр.

И. ПРОКОПЬЕВ,
колхоз полевочĕ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Сталинла преми лауреачĕ

Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла премийĕ лауреачĕ Филипп Миронович Лукин композитор — пирĕн республикăри паллă çынсенчен пĕри. Вăл çырнă хаваслă юрăсем халĕ чăваш халăхĕн юратнă юррисем пулса, кулленхи пурнăçа кĕрсе вырнаçрĕç. Чăвашсен профессиллĕ музыка культурин никĕсне хывакан Ф. П. Павловпа В. П. Воробьев çырнă произведенисем евĕр, Ф. Лукинăн юррисем илемлĕ те туйăмлă кĕвĕсемпе палăраççĕ, вĕсем идейăллă содержани енчен çÿлти пусăмра тăрса, халăхăн чи тарăн шухăш-кăмăлĕсене уççăн сутатса параççĕ.

Филипп Лукин 1913 çулта, Çавалçырма ялĕнче (халĕ Чăваш АССР-ĕнчи Красноармейски районĕ) вăтам хресчен çемйинче çуралнă.

1928 çулта Ишекри шкултан вĕренсе тухсан, Лукин Шупашкарта ун чухне çеç уçăлнă музыка техникумне вĕренме кĕрет. Кунта вăл, Ф. Павловпа В. Кривоносов композиторсем патĕнче вĕренсе, вырăссен классикăллă музыкипе тата чăваш халăх юррисен уйрăмлăхĕсемпе лайăх паллашать.

Музыка техникумĕнчен вĕренсе тухсан, Ф. М. Лукин пĕр вăхăт Чăвашсен государство хорĕнче юрлать, унтах дирижер помощникĕ пулса ĕçлет. 1935 çулта вара, музыка пĕлĕвĕсене малалла ÿстерес ĕмĕтпе, Филипп Миронович Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тăракан консерваторине вĕренме кĕрет. Кунта вăл хор дирижерĕсем хатĕрлекен факультетра вĕренет, çав вăхăтрах хăйĕн композиторла пултарулăхне аталантарать. Консерваторинче вăл, профком председателĕ пулса, обществăллă ĕçе активлă хутшăнать, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членне кĕрет.

1942 çулта Ф. М. Лукин консерваторинчен ăнăçлă вĕренсе тухать. Вăл тăван Шупашкара таврăнать. Чăвашсен государство юрăпа ташă ансамблĕн художествăллă руководителĕ тата аслă дирижерĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Çак вăхăтран пуçласа вăл чăваш музыка культурин чи активлă деятелĕ пулса тăрать, тăван искусствăна аталантарас ĕçре пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Ф. М. Лукин «Çапăçу юрри», «Колхоз хĕрĕн юрри», «Хĕрлĕ Çарти тусене» юрăсем çырать. Çак юрăсем—фашистла вăрă-хурахсене çапса аркатма совет çыннисене хавхалантарнă юрăсем. Уйрăмах «Герой Иван Поляков» юрăна палăртмалла. Ăна композитор Днепр урлă çапăçса каçнă чухне паттăрлăх кăтартнă Совет Союзĕн Геройне, пирĕн земляка И. Полякова чысласа çырать.

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕпе пĕрле Ф. М. Лукин Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче пулать. Ансамбль Калинински тата Брянск фрончĕсенче çапăçакан салтаксемпе офицерсем валли 120 концерт парать.

Каярахпа вара унăн творчествинче лирика жанрĕ тĕп вырăн йышăнать. «Шурă роза» тата «Çамрăксен юрри» чăваш халăхĕ хушшинче анлăн сарăлаççĕ.

Юлашки вăхăтра çырнă çĕнĕ юрăсенче Ф. М. Лукин композитор мирлĕ пурнăç çулĕ çине тухнă совет халăхне, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тата Коммунистсен партине, аслă çулпуçа Сталин юлташа мухтаса юрлать: «Хаваслăх юрри», «Пирĕн хăват», «Атăл çинчен хывнă юрă». Лирика жанрĕ «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç», «Кĕсле купăс», «Ирхи юрă», «Кÿлĕ хĕрринче» юрăсемпе пуянланать.

Композитор хăйĕн творчествине паянхи пурнăçпа тачăн çыхăнтарать, ăна пур енчен те тарăн çутатса пама тăрăшать. Çапла «Аслă çулпуç», «Тăван çĕршыв», «Мирлĕ пурнăçшăн», Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Коротков çинчен, СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем çинчен çĕнĕ юрăсем çуралаççĕ.

Композиторăн вăрçă хыççăнхи юррисенчен «Пире Сталин ырлăх пачĕ», «Салам, Мускав!» «Хăна юрри» тата «Телейлĕ туслăх»—чи лайăххисем. Вĕсенче Ф. М. Лукинăн композиторла таланчĕ уççăн палăрать. Çак юрăсемшĕн Ф. М. Лукин 1952 çулта Сталинла премин илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Тулли хаваслăхпа хавхаланса çырнă «Пире Сталин ырлăх пачĕ» юрă часах Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн репертуарне кĕрсе, халăх хушшинче анлăн сарăлчĕ. Ăна тăван республикăн пур кĕтессинче те—колхозра та, фабрикăсемпе заводсенче те, шкулсенче те юрлаççĕ.

Чăваш халăх поэчĕ П. Хузангай сăввине кĕвĕлесе çырнă «Салам, Мускав!» юрă чи малтан 1950 çулти кĕркунне Мускавра пулса иртнĕ чăваш литературин вечерĕсенче янăрарĕ. Юрăра пĕтĕм тĕнчери халăхсем пирĕн Тăван çĕршывăн столицине—мирпе ирĕклĕх, телейпе туслăх паракан хулана—çав тери ăшă кăмăлпа юратса хисепленине кăтартнă.

«Хăна юрри» тата «Телейлĕ туслăх»—çутă лирикăллă произведенисем. Вĕсенче композитор совет çыннисене телейлĕ пурнăç паракан социализмлă ĕçе мухтать.

Ф. М. Лукин композитор чăваш музыка искусствине аталантарса пырас ĕçре пархатарлă ĕç тăвать. Чăвашсен государство юрăпа ташă ансамбльне ертсе пынипе пĕр вăхăтрах вăл Чăваш совет композиторĕсен союзĕн правлени председателĕ тата СССР совет композиторĕсен союзĕн правлени членĕ пулса ĕçлет.

Чăваш совет музыкине аталантарас ĕçре паллă çитĕнÿсем тунăшăн СССР Правительстви Ф. М. Лукина «Хисеп палли» орденĕпе тата икĕ медаль парса наградăларĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ ăна Хисеп грамоти тата искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне пачĕ.

Творчествăллă ĕçре нумай ĕçленипе пĕр вăхăтрах, Ф. Лукин обществăллă ĕçе активлă хутшăнать. 1948 çултанпа вăл КПСС Шупашкар хула комитечĕн членĕ. 1947 тата 1950-мĕш çулсенче Лукин юлташа Шупашкар хула Совечĕн депутатне суйлаççĕ. Ф. М. Лукин хăйне халăх шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа тата чыслăн туса пырать. Вăл суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассишĕн чун-чĕререн тăрăшать.

Кăçал каллех Чăвашсен государство филармонийĕнче ĕçлекенсем Шупашкар хулинчи 109-мĕш суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятельне, Сталинла преми лауреатне Филипп Миронович Лукин юлташа кандидата тăратрĕç.

Ю. ИЛЮХИН.

Ял Совет председателĕ

ЕЛЧĚК. Çĕнĕ Тĕмерти «Новая жизнь» колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Çĕнĕ Тĕмер суйлав округĕ тăрăх район Советне депутата суйлама Егор Сергеевич Герасимов юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ. Округри суйлав комиссийĕ Герасимов юлташ кандидатурине регистрациленĕ.

Е. Герасимов юлташ 1913 çулхи майăн 13-мĕшĕнче Çĕнĕ Тĕмерти вăтам хресчен çемйинче çуралнă.

1930 çулта Е. Герасимов юлташ хальхи Серов хулине кайнă, унта пĕр заводра икĕ çул хушши токарь пулса ĕçленĕ. Унтан тăван ялне таврăнсан, вăл ялпо магазинĕн продавецĕ пулса ĕçленĕ, 1935 çулта Совет Çарĕн ретне тăнă. 1942—1943 çулсенче вăл Аслă Отечественнăй вăрçăра нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă. Ывăр аманнă хыççăн, инвалид пулса киле таврăннă. Унтанпа вăл ял Совет председателĕ пулса пĕр улшăнмасăр ĕçлет.

Н. ФЕДОРОВ.

Ватă депутат

Район Совечĕн черетлĕ сессийĕ пырать. Трибуна умĕнче — вăтам кĕлеткеллĕ, шуралнă çÿçлĕ ватă çын. Вăл, куçлăхне тÿрлетсе блокнот çине пăхса илет, унтан пушшех хĕрÿленсе калаçать. Оратор ĕçри çитменлĕхсене тĕрĕс критиклет, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене палăртать. Депутатсем унăн критикăллă асăрхаттарăвĕсене чĕре патне хурса йышăнаççĕ...

Вăл — Куславкка райсовечĕн чи ватă депутачĕ Давлетша Зиганьшиевич Юсупов юлташ.

Вăтăр çул ĕçлет вăл Совет ĕçĕнче. Чухăн тутар ачи, хăй тĕллĕн хутла вĕренсе, тĕрĕслĕхпе телей ăçта пулнине лайăх чухласа илет. Çамрăк Давлетша Октябрьти революци халăха çĕр, çăкăр, мирлĕ пурнăç панине курать. Çавăнпа вăл хăйĕн мĕнпур вăй-хăватне Совет влаçне çирĕплетме парать. Ялта чухăнсен комитечĕ тусан, вăл — унăн активлă членĕ. Ун хыççăн Давлетша Зиганьшиевич — ялти кооператив, колхоз организаторĕ. Юсупов юлташ ял ĕçченĕсене колхоза пĕрлештерессишĕн, кулаксене класĕпех пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешет.

Давлетша Зиганьшиевич 1927 çултанпа КПСС членĕ.

Парти ăна политикăллă пĕлÿ, коммунистла воспитани, пысăкрах ĕç парать. 1932 çулта план работникĕсен Горький крайĕнчи курсне пĕтерсе килнĕ хыççăн, Юсупов юлташ район работникĕ пулса тăрать. Вăл темиçе çул хушши райплан председателĕ, райфо заведующийĕ тата райисполком секретарĕ пулса ĕçлет.

Куç вăйсăрланнă пирки Юсупов юлташăн хут ĕçне хăвармалла пулнă. Вăл вара тăван ялне таврăнать. Отечественнăй вăрçă умĕн тата вăрçă çулĕсенче Юсупов юлташ — Кармăш ял Совет исполкомĕн, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз правленийĕн председателĕ.

Юлашки çулсенче Юсупов юлташ — КПСС райкомĕн членĕ, колхозри парторганизаци секретарĕ. Вăл хăйĕн пуян опычĕпе пĕлĕвне пĕрлешсе пысăкланнă «Алга» ялхуçалăх артельне организацие хуçалăх енчен çирĕплетме парать.

Çавăнпа та район Советне депутата суйламалли çынсене палăртма вăхăт çитсен, «Алга» колхоз членĕсем, пĕр кăмăллă пулса, унăн ятне асăнчĕç.

Х. ТУХВАТУЛЛИН, довереннăй.

Пысăк шанăç

Февралĕн 4-мĕшĕнче Шупашкарти электромеханически техникум çуртĕнче хулари 93-мĕш суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕ пулчĕ. Пухура суйлавçăсем ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 93-мĕш суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама тăратнă кандидатпа — партин Чăваш обкомĕн секретарĕпе Тимофей Аркадьевич Ахазов юлташпа тĕл пулчĕç.

Суйлавçăсен пухăвне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри партбюро секретарĕ Шувалов юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ.

Унтан ĕççыннисен довереннăйĕ Кудряшов юлташ сăмах илчĕ.

— Хаклă суйлавçăсем! — терĕ вăл.— Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен пухăвĕ, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, хула Советне депутата суйлама Т. А. Ахазов юлташа кандидата тăратма йышăнчĕ. Партин Чăваш обкомĕн секретарĕ пулса ĕçлесе, Ахазов юлташ халăх ĕçне, Совет правительствипе коммунистсен партийĕн ĕçне чыслăн пурнăçласа пыма чунтан-чĕререн тăрăшать. Парти вăл тăрăшса ĕçленине пысăка хурса хакларĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче ăна партин Центральнăй Комитечĕн членĕн кандидатне суйларĕç.

Т. А. Ахазов юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн, Кудряшов юлташ суйлавçăсене февралĕн 22-мĕшĕнче чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕшĕн Тимофей Аркадьевич Ахазов юлташшăн сасăлама чĕнчĕ.

Трибуна умне 93-мĕш округри суйлавçă Петров юлташ тухать. Вăл суйлава хатĕрленнĕ май ĕççыннисен патриотла çĕкленĕвĕ питех те вăйланни çинчен, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри цехсенче пурте хастарлă ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

— Суйлав ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлесе,—терĕ вăл,—эпĕ ертсе пыракан бригада январь уйăхĕнчи программăна 380 процент тултарчĕ. Бригада членĕсем февраль уйăхĕнче тата та лайăхрах ĕçлеме, уйăхри задание 400 процент тултарма сăмах пачĕç.

Пухура суйлавçă Хорева юлташ хĕрÿллĕ сăмах тухса каларĕ. Вăл завод коллективĕ суйлав умĕнхи кунсенче пысăк çитĕнÿ туни çинчен каласа пачĕ, 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта лайăх ĕçлесе завод СССР Электропромышленность министерствин предприятийĕсен ăмăртăвĕнче пĕррремĕш вырăн йышăнни çинчен, завода СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла туни çинчен пĕлтерчĕ.

— Партин Чăваш обкомĕ пысăк пулăшу панипе завод çак çитĕнĕве тума пултарчĕ,—терĕ вăл.—Заводри рабочисем Ахазов юлташа хула Советне депутата суйлама кандидата тăратса, вăл завод коллективĕн шанăçне чыслăн тÿрре кăларассине, пирĕн республика столицине тата ытларах лайăхлатма, илемлĕтме пĕтĕм вăя хурса тăрăшассине çирĕппĕн шанса тăраççĕ.

Трибуна умне Т. А. Ахазов юлташ тухрĕ. Суйлавçăсем ăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Вăл суйлавçăсем шаннă ĕçе чыслăн пурнăçласа пыма тăрăшасси çинчен каларĕ.

— Депутат вăл халăх тарçи пулса тăрать, тет Сталин юлташ, эпĕ çак ята ĕçре тÿрре кăларма пĕтĕм вăя хурса тăрăшăп,—терĕ Ахазов юлташ.

Унтан суйлавçăсем Ахазов юлташа тĕрлĕ ыйтусем нумай пачĕç. Вăл çав ыйтусем çине ответлерĕ.

Пухура суйлавçăсем хăйсен кандидатне паха сĕнÿсемпе наказсем чылай пачĕç, вĕсене пурнăçлани хулари ĕççыннисен пурнăçне чылай лайăхлатма пулăшĕ.

В. КИТАХ.

Хирургсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта республикăри хирургсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура Горькипе Хусантан килнĕ профессорсемпе научнăй работниксем те пулчĕç. Канашлу хирурги пулăшăвне лайăхлатмалли майсем çинчен республикăн аслă хирургĕ И. М. Кузнецов тата ытти юлташсем тунă докладсене сÿтсе яврĕ.

Хирурги пулăшăвĕ республикăра çултан-çул лайăхланса пырать. Ик-виçĕ çул каялла операци туса сыватас ĕçе пысăк больницăсем кăна тума пултарнă пулсан, хальхи вăхăтра пур больницăсенче те хирурги уйрăмĕсем пур. Хирургсенчен нумайăшне вырăнтах, Шупашкарпа Улатăр больницисенче, вĕрентсе хатĕрленĕ. 1952 çулта хирургсем операци туса темиçе çĕр çынна сыватнă тата ĕçе юрăхлă тунă.

Анчах хирурги пулăшăвне парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсенчен пĕри — хирургсен квалификацине ÿстерес ĕç начар пулса пыни. Хирургсенчен нумайăшĕ çамрăк врачсем, вĕсем пысăк тата кăткăс операцисене пур чухне те тума пултараймаççĕ. Çавăнпа вĕсене малалла вĕрентесси питĕ кирлĕ задача пулса тăрать. Врачсен квалификацине ÿстерме Чăваш АССР Сывлăх министерствине путевкăсем нумай параççĕ, анчах министерство çав путевкăсемпе начар усă курать. 1952 çулта хирурги енĕпе курссенче вĕренме каймалли темиçе путевка ахалех пĕтнĕ. Хирургсен квалификацине ÿстермелли тепĕр май вăл—вĕсене вырăнти пысăкрах больницăсенче вĕрентесси пулать. Çак енĕпе халĕ Шупашкарпа Улатăр больницисем кăна ĕçлеççĕ-ха. Вĕсен ăсталăхне ÿстерсе пыма Канаш, Çĕмĕрле, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпÿ тата Куславкка районĕнчи Сала больницисенче те условисем пур. Кунта Сывлăх министерстви енчен ĕçе пуçарса пыни кирлĕ.

Юлашки çулсенче совет медицини чирлĕ çынсене сыватмалли çĕнĕ майсемпе тата çĕнĕ эмелсемпе пуянланчĕ. Анчах больницăсем вĕсемпе сахал усă кураççĕ. Сăмахран, ÿт айне тканьсем касса лартса сыватас ĕçе 11 больницăра кăна туса пыраççĕ. Нумай районсенче юн ярас ĕçе халĕ те йĕркелесе çитереймен. Врачсем хăйсен ĕçĕнче рентгенпа тата лабораторисемпе сахал усă кураççĕ. Çаксем вĕсем чире вăхăтра, тĕрĕс тĕпчесе пĕлме тата чиртен ăнăçлă сыватма чăрмантараççĕ.

Канашлура васкавлă пулăшу станцийĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен те чылай каларĕç. Кун пек станцисем пирĕн республикăра 4 хулара кăна пур, ытти çĕрте çук. Вĕсен шутне малашне ÿстермелле тата ĕçне лайăхлатмалла. Васкавлă пулăшу станцийĕсене квалификациллĕ кадрсемпе çирĕплетмелле. Çавнашкалах, васкавлă пулăшу парас ĕçе ялсенче те йĕркелеме тытăнмалла. Фельдшерсемпе сестрасене васкавлă пулăшу пама вĕрентес пулать.

Производствăра инкек-синкек курассине чакарасси çинчен хирург П. Николаева юлташ доклад турĕ. Етĕрнери хирурги больницин аслă врачĕ Б. Яковлев юлташ колхозсене пысăклатнăранпа, вĕсенче машинăсемпе ытларах ĕçлеме пуçланăранпа ялхуçалăхĕнче травматизм чакса пынине питĕ ĕненмелле кăтартса пачĕ. Етĕрне районĕнче 1952 çулта травматизм, 1950 çулхипе танлаштарсан, чакнă. Ялхуçалăхĕнчи травматизмпа кĕрешес тĕлĕшпе врачсем кăна мар, колхоз председателĕсемпе бригадирсем те ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Етĕрне районĕн опытне ытти районсенче те анлă сарас пулать.

Чылай хирургсем (Покровский, Кузнецов, Тимошенко юлташсем) аптека управленине хирурги инструменчĕсемпе çĕнĕ эмелсем начар тăратнăшăн çивĕччĕн критиклерĕç. Аптека управленийĕ больницăсемпе çыхăнса ĕçлемест, вĕсен нушисене шута илмест.

Канашлура Горькирен килнĕ И. Пимхес профессор производствăри травматизма чакармалли майсем çинчен, Хусантан килнĕ научнăй работник Н. Якупова юлташ Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене сыватас ĕçе организацилесси çинчен научнăй докладсем туса пачĕç.

Канашлу хирурги пулăшăвне лайăхлатма мĕнле ĕçсем тумаллине палăртрĕ.

Социализмлă Ĕç Геройĕсем—ял Советне депутата суйламалли кандидатсем

ЕЛЧĚК. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пысăк активлăхпа иртрĕ. Пухура чи малтанах Социализмлă Ĕç Геройĕ Емельянов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл Аслă Пăла Тимеш ял Советне депутата суйлама колхоз председательне СССР Верховнăй Совет депутатне, Социализмлă Ĕç Геройне Василий Васильевич Зайцев юлташа кандидата тăратма сĕнет.

— Зайцев юлташа,—тет вăл,— иртнĕ суйлавра та эпир ял Советне депутата суйланăччĕ. Вăл суйлавçăсен шанчăкне тÿрре кăларчĕ, колхозлă ялăн сăн-сăпатне илемлетессишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлерĕ.

Зайцев юлташ ертсе пынипе, пирĕн колхоз чылай çитĕнÿсем турĕ. Иртнĕ 1952 ялхуçалăх çулĕнче артель членĕсем кашни гектартан вăтам шутпа 21-шер центнер тĕштырă пухса кĕртрĕç. Колхоз çултан-çул тĕрекленсе, вăйланса пырать, унăн тупăшĕ икĕ çул ĕнтĕ 1 миллион та 200-шер пин тенкĕ ытла шутланать.

Кун хыççăн колхозри агроном Е. И. Васильева юлташ сăмах илет. Вăл ял Советне депутата суйлама колхозри тырпул мастерне Социализмлă Ĕç Геройне Александра Егоровна Петрова юлташа кандидата тăратма сĕнет.

Малалла колхозниксемпе колхозницăсем, пурте пĕр кăмăллă пулса, ял Советне депутата суйлама колхоз агротехникне Социализмлă Ĕç Геройне Георгий Иванович Емельянов юлташа, уй-хир бригадин бригадирне Самаков юлташа, кайăк-кĕшĕк фермин заведующине Овчинникова юлташа—пурĕ 15 çынна кандидата тăратрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ те политикăллă пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Пухура 700 çын ытла пулчĕ.

Ял Советне депутата суйлама колхоз председательне Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне Г. И. Тябуков юлташа, ĕне фермин заведующине Мартынов юлташа, ялти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Молоствов юлташа, уй-хир бригадин бригадирне Грядкин юлташа кандидата тăратнă.

Суйлавçăсем пур çĕрте те вырăнти Советсене суйламалли куна ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме обязательствăсем илеççĕ, февралĕн 22-мĕш кунĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама сăмах параççĕ.

М. ЕФРЕМОВ.

Суйлав умĕнхи агитациллĕ-массăллă ĕç

(Редакцие килнĕ çырусем тăрăх)

Суйлава хатĕрленесси совет халăхĕн политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ нихçанхинчен те хăватлăн ÿснĕ лару-тăрура пулса пырать.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Указсем кăларнă хыççăнах, республикăри колхозсенчи, предприятисемпе учреждениcенчи тата МТС-сенчи агитаторсем суйлав çинчен каласусем ирттерме тытăнчĕç. Сакăн çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине килекен çырусем те лайăх каласа параççĕ. Вĕсен авторĕсем пирĕн агитаторсем ĕççыннисен анлă массине Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем çинчен, Сталинла Конституци çинчен, совет суйлав законĕ çинчен, совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчери миршĕн кĕрешни çинчен, совет демократийĕ буржуаллă демократирен малта тăни çинчен каласа пани, вырăнти Советсене суйламалли Положенипе паллаштарни çинчен çырса пĕлтереççĕ.

Паллă ĕнтĕ, агитациллĕ-массăллă ĕçе тивĕçлĕ пусăма хăпартас тесен, агитаторсене куллен ертсе пыни, вĕсемпе канашлусем, семинарсем ирттерни кирлĕ.

З. Порфирьев юлташ (Красноармейски районĕ) пĕлтернĕ тăрăх, Енĕшкассинчи агитпункт заведующийĕ Г. Михайлов юлташ агитаторсемпе тăтăшах семинарсем ирттерет. Ку таранччен пулнă семинарсенче «Совет суйлав системи—тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи», «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем» темăсемпе докладсем ирттернĕ. Çитес семинарсенче «Коммунизмăн аслă стройкисем тата вĕсен халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ», «Совет Союзĕнчи гражданисен прависемпе обязанноçĕсем», «Тĕнчери лару-тăру» тата ытти темăсем тăрăх докладсемпе лекцисем ирттерме палăртнă.

Агитаторсемпе семинарсем ирттерни вĕсене ĕçре пысăк пулăшу парать. Кунта агитаторсене кашни 10—15 кил çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем суйлавçăсене вырăнти Советсене суйламалли Положени çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулни çинчен ăнлантараççĕ. Кашни эрнерех суйлавçăсем валли тĕрлĕ темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем пулаççĕ. Çак кунсенче çамрăк суйлавçăсен пухăвĕнче «Социализмран коммунизма куçса пымалли условисемпе çулсем» темăпа лекци вуласа панă.

Суйлавçăсем пурăннă çĕрте агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелесси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Ку тĕлĕшпе Улатăрти чугун çул техникумĕнчи преподаватель Г. Александров юлташ опычĕ ыттисемшĕн усăллă.

М. Емшаков юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Улатăрти Гоголь урамĕнче пурăнакан пенсионерка Ольга Яковлевна Дашкова хваттерне суйлавçăсем пуханнă. Вырăнти тĕслĕхсемпе тата фактсемпе ăста усă курса, агитатор Александров юлташ суйлавçăсене партин съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсем çинчен ăнлантарса панă.

— Партипе правительство,—тенĕ агитатор,—пирĕн социализмлă Тăван çĕршыва малалла хăватлăн чечеклентерессишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Ĕлĕк Улатăр хули, уезд хули—пĕчĕк те тĕттĕм, пылчăклă хула пулнă. Халĕ вăл республикăри культурăллă та ÿссе пыракан хуласенчен пĕри пулса тăчĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче предприятисен хисепĕ ÿсрĕ. Нумай вырăнсенче çĕнĕ çуртсем лартнине эсир пурте куратăр. Хула çулсеренех илемленсе пырать. Благоустройство ĕçĕсем валли кăна 895 пин тенкĕ укçа расходланă.

Совет влаçĕн çулĕсенче хулара пулса иртнĕ улшăнусем çинчен те агитатор тĕплĕн каласа панă. Сăмахран, ĕлĕк хулара гăвата пуçламăш шкул кăна пулнă. Халĕ 3 техникум, фельдшерсен шкулĕ, вăтам шкулсем 7, çичĕ çул вĕренмелли шкулсем нумай ĕçлеççĕ, паравус машинисчĕсем хатĕрлекен шкул, çамрăк рабочисен икĕ шкулĕ, клубсемпе библиотекăсем нумай.

Çак улшăнусем кашнин чĕрине хаваслантараççĕ, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес кăмăла çĕклентереççĕ. Çапла сисĕнмесĕрех калаçу пуçланса каять.

— Пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн,—тенĕ Соколова суйлавçă,—партипе правительствăна тата Аслă Сталина тав! Вĕсем тăрăшнипе пула ĕнтĕ пирĕн ачасем савăнăçпа наукăн аслă çулĕ çине тухрĕç.

Сĕнтĕр районĕнчен Д. Вершков юлташ пĕлтернĕ тăрăх, Вăрманкасси ялĕнче агитаторсене уйрăм участоксем çирĕплетсе паман. Ку ĕçе тума партипе комсомол организацийĕсем çÿлтен кăтарту парасса кĕтсе тăраççĕ. «Колхозлă ял ĕçченĕсем,—тесе çырать корреспондент,—хальхи вăрăм каçсенче вăхăта культурăллă ирттерессшĕн, лекцисемпе докладсем, радио итлессшĕн. Анчах вĕсен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреймеççĕ».

Çакнашкал çитменлĕхсем ытти хăшпĕр колхозсенче те пур. Парторганизацисен çав çитменлĕхсенчен тивĕçлĕ вывод тумалла.

Агитаци ĕçĕнчи тĕрлĕ формăсемпе тата меслетсемпе усă курас тĕлĕшпе Чкаловски районĕнчи Анат Туçа ялĕнчи агитпункт лайăх тĕслĕх кăтартать. Вăл чăннипех те агитациллĕ-массăллă ĕçĕн центрĕ пулса тăнă. Кунта ваттисене те, çамрăксене те тăтăшах курма пулать. Ватă суйлавçăсем çамрăксене патша вăхăтĕнчи суйлавсем çинчен каласа параççĕ. Мускавран е Шупашкартан радиопа паракан передачăсене суйлавçăсем агитпункта пĕрле пухăнса итлеççĕ. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа,—тесе çырать И. Мешков юлташ,—6 хутчен пĕрле пухăнса радио итленĕ, вĕсенче 1.206. суйлавçă пулнă.

Агитпунктра çамрăк суйлавçăсен каçĕсем кашни эрнерех пулса иртеççĕ. Пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакансем ялта 24 çын. Колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Н. Горшков юлташ кăçал пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакан çамрăксемпе «Çамрăк гражданисен прависемпе обязанноçĕсем» темăпа калаçу ирттернĕ.

Суйлава хатĕрленме тытăннăранпа ирттернĕ лекцисемпе докладсене 1.475 çын итленĕ, 6 хут кино кăтартнă, спектакльсемпе концертсем те чылай пулнă. Пĕр хут ыйтусемпе ответсен каçне ирттернĕ.

Агитпунктра справка сĕтелĕ йĕркеленĕ. Дежурнăй агитаторсем суйлавçăсен ыйтăвĕсем çине ответсем параççĕ. Январь уйăхĕнче кăна вĕсем суйлавçăсен 118 ыйтăвĕ çине ответсем панă, суйлавçăсемпе пĕчченшерĕн чылай калаçусем ирттернĕ.

Çавăн пекех агитпунктра кĕнекесен вулассине йĕркеленĕ. Интереслĕ кĕнекесене суйлавçăсем пĕрле пухăнса вулаççĕ. С. Бабаевскин «Ылтăн Çăлтăр кавалерĕ», Н. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» кĕнекисене ушкăнпа вуланă çĕре 150 суйлавçă ытла хутшăннă.

Калинино районĕнчи Чулкас суйлав участокĕнчи агитпунктра çамрăксем вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Комсомол комитечĕ пуçарнипе эрнере пĕр хут çамрăксен каçĕ пулать. Унта çамрăк суйлавçăсем валли ятарласа докладсем ирттереççĕ. Вĕсем валли Н. Ксенофонтов учитель «Совет суйлав системи — тĕнчери чи демократиллĕ суйлав системи» темăпа, П. Сергеев коммунист «Сталинла Конституци çамрăксене мĕн пачĕ» темăпа докладсем тунă. Агитаторсем çамрăк суйлавçăсене суйлав Положенийĕпе паллаштараççĕ.

Агитаторсен суйлав умĕнхи ĕçе предприятисемпе колхозсем умĕнче тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтарса туса пырас пулать. Ку тĕлĕшпе Улатăр станцийĕн деповĕнчи агитатор Л. Щеглова паха тĕслĕх кăтартать. Вăл хăйĕн каласăвĕсене депо умĕнче тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтарса ирттерет, чугун çул работникĕсем пилĕк çуллăх план заданийĕсене пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать, малта пыракансен опычĕпе паллаштарать. Машинистсем иртнĕ çулта йывăр тиенĕ составсемпе планран ирттерсе пĕр миллиона яхăн груз турттарнă, 1.060 тонна топливо перекетленĕ. Агитатор малта пыракан машинистсен—Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ П. Казяев, Н. Голованов, Л. Наумов, В. Ратников тата ытти юлташсен ĕç опычĕ çинчен ăнлантарать.

Çав вăхăтрах агитатор юлхавланса ĕçлекенсене питлет.

— Пирĕн коллективра,—тет вăл,— юлса пыракансем сахал, анчах ун пеккисем пур-ха. Копылов, П. Кочетков, М. Серебряков ĕç çине тимсĕр пăхнине пула час-часах брак тăваççĕ, поездсене йĕркеллĕ çÿретме чăрмантараççĕ.

Агитаторсем умĕнче малашне тепĕр ответлă задача тăрать, вăл—коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн агитацилесси.

Суйлав умĕнхи агитациллĕ-массăллă ĕçе куллен лайăхлатса пырар.

Строительство материалĕсем хатĕрлеççĕ

ИШЛЕЙ. Районти чылай колхозсем çĕнĕ çуртсемпе выльăх-чĕрлĕх витисем лартма строительство материалĕсем хатĕрлеççĕ. Çак ĕç Карл Маркс ячĕпе тăракан, «За коммунизм», Киров ячĕпе тăракан, «Знамя труда» колхозсенче уйрăмах ăнăçлă пырать.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал 50 ĕне, 40 пăру, 500 чăх-чĕп вырнаçмалăх çĕнĕ витесемпе çуртсем лартма тата кивĕ çуртсене юсаса çĕнетме палăртнă. Çак ĕçсене тума вĕсем 800 кубометр йывăç касса хатĕрлеççĕ.

Çавăн пекех «За коммунизм» колхоз 700 кубометра яхăн строительство материалĕ хатĕрлет. Строительство бригадинчи колхозниксем Атăл леш енчи вăрманта 500 кубометр ытла йывăç касса хатĕрленĕ.

«Активист» колхоз членĕсем кăçал çĕнĕ вите, 50 тонна çĕрулми кĕмелĕх хранилище, типовой сушилка, кормокухня лартма палăртнă. Халĕ строительство материалĕсем хатĕрлеççĕ.

Колхозсенче пулса иртекен отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхозниксем строительство ĕçĕсене вăйлăн аталантарса пыма, саман кирпĕчĕ анлăн усă курма сĕнÿсем парса хăвараççĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Пусӑ ҫаврӑнӑшӗ тӑвас тӗлӗшпе МТС-сен ытларах тӑрӑшмалла

Партин XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли аслӑ программа палӑртса пачӗ. Ҫӗрӗҫӗнче малашне те тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартса пырасси тӗп задача пулса тӑрать. Ҫав задачӑна пирӗн колхозсем хӑйсен уй-хирӗсенче тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем йӗркелесе пынипе татса памалла. Нумай ҫул ӳсекен курӑксем акса йӗркеленӗ тырпул ӳстермелли тата выльӑх апачӗсем акса тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине пур колхозсен те хӑвӑртрах куҫса ҫитмелле. Ҫакӑ вӑл ялхуҫалӑх культурисене колхозсем тӑтӑшах пысӑк тухӑҫлӑ туса илессине, ҫав тухӑҫлӑха ҫулсерен хӑпартса пырассине татса памалли тӗп услови пулса тӑрать.

Пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене тӗрӗс йӗркелени партин XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхӗ умне лартнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пыма пулӑшать, ялхуҫалӑхӗнчи пур культурӑсен тухӑҫлӑхне те ӳстерет, выльӑх апачӗн ҫирӗп никӗсне хывса, выльӑх-чӗрлӗх йышне нумайлатнипе пӗрлех унӑн тухӑҫне те хӑпартса пыма май парать.

Юлашки ик-виҫӗ ҫул хушшинче республикӑри колхозсенче ҫӗр йӗркелес тата пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене йӗркелесе ярас тӗлӗшпе чылаях пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ. 1950 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне республикӑра 1923 колхоз пулнӑ. Унтанпа нумай колхозсем пӗрлешсе пысӑк хуҫалӑхлӑ пулса тӑчӗҫ. 1952 ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне республикӑра 833 колхоз шутланнӑ, вӗсенчен 602-шӗ пӗрлешсе пысӑкланнӑ колхозсем. Пӗрлешсе пысӑкланнӑ 602 колхозран 547 колхоз хуҫалӑхӗнче 1951—1952 ҫулсенче ҫӗр йӗркелӳ ӗҫӗсене туса ирттернӗ. Халӗ ӗнтӗ республикӑри пур колхозсем те хӑйсен уйӗсенче курӑксемпе тырпул туса илмелли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем тунӑ. Выльӑх апачӗ акса тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене 618 колхозра, пахча ҫимӗҫсем, техникӑллӑ культурӑсем акса тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене 72 колхозра организациленӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, республикӑри колхозсенче пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем йӗркелесе ярас ӗҫе, пӗтӗмӗшпе илсен, вӗҫленӗ темелле. Анчах ҫав пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса пырас ӗҫ чӑтма ҫук кая юлса пырать-ха.

Тырпул тата выльӑх апачӗ туса илмелли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене нумай ҫул ӳсекен курӑксем акса тӗрӗс йӗркеленӗ тата куҫса ҫитнӗ колхозсем халӗ республикӑра 19 кӑна. Тырпул туса илмелли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса ҫитнӗ, анчах выльӑх апачӗсем акмалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене йӗркелесе ҫитермен колхозсем 31 шутланаҫҫӗ. 1952 ҫулта нумай ҫул ӳсекен курӑксене уйри пусӑ ҫаврӑнӑшӗсенче пусӑ туллӑшӗпех 128 колхозра, выльӑх апачӗ акса тумалли пусӑ ҫаврӑнӑшӗсенче — 133 колхозра кӑна акнӑ. Ытти колхозсем тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса пырас тапхӑрта кӑна-ха.

Пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса пырассине, тӗпрен илсен, нумай ҫул ӳсекен курӑксем акни татса парать. Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ план тӑрӑх, республикӑри колхозсенче нумай ҫул ӳсекен курӑксене 1955 ҫул тӗлне ҫулсеренех 55—60 пин гектар акса тӑмалла пулать. Тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса ҫитесси, чи малтан, ҫак плана кашни колхоз ӑнӑҫлӑ тултарнинчен килет.

Анчах пӗтӗмӗшпе республикӑра ӗҫсем епле пыраҫҫӗ-ха? 1952 ҫулта план тӑрӑх нумай ҫул ӳсекен курӑксене пусӑ ҫаврӑнӑшӗсенче 30 пин гектар акмалла пулнӑ, акасса 38 пин гектар ытларах акнӑ. Нумай колхозсенче курӑксем пӗтсе сайраланнӑ пирки, вӗсене 1952 ҫулта пурӗ те 30,5 пин гектар ҫинчен ҫеҫ пухса кӗртнӗ. Ҫакӑ вӑл курӑксем акса пухма 1955 ҫул тӗлне пӑхнӑ планӑн 28,6 процентчӗ чухлӗ кӑна пулать.

Малтанлӑха тунӑ план тӑрӑх, республикӑри колхозсем кӑҫал нумай ҫул ӳсекен курӑксем 40 пин гектар акмалла. Ҫак плана пурнӑҫа кӗртме нумай ҫул ӳсекен курӑксен вӑрлӑхӗ 6.400 центнертан кая мар кирлӗ. Анчах вӑрлӑх фондне курӑк вӑррисем халӗ мӗн пурӗ те 4.549 центнер е 71 процента яхӑн кӑна хывнӑ.

Нумай колхозсенче вӑрлӑх валли ҫулса илнӗ нумай ҫул ӳсекен курӑксене халӗ те ҫапман, вӑррине шӗкӗлчемен. Колхозсенче курӑксен вӑрлӑхне хатӗрлес тӗлӗшпе ҫавӑн пек йывӑрлӑхсем пулнишӗн нумай енчен МТС-сем ответлӑ. Машина-трактор станцийӗсем нумай ҫул ӳсекен курӑксене пухса кӗртмелли плана тултарма кирлӗ пек тӑрӑшман, ку ӗҫе питӗ кая хӑварнӑ. Ҫавна пула курӑксен вӑрлӑхӗ нумай колхозсенче тӑкkаланнӑ. Ку ӗнтӗ государствӑна та, колхозсене те пысӑк сиен кӳни пулса тӑрать. Ишлей районӗнчи «За коммунизм» колхозра вӑрлӑх валли 24 гектар клевер хӑварнӑ пулнӑ. Ҫак клевера вӑхӑтра ҫулса илнӗ пулсан, сахалтан та 24 центнер вӑрлӑх тухнӑ пулӗччӗ. Договор тӑрӑх курӑка Ишлей МТС-ӗн комбайнпа пухса кӗртмелле пулнӑ. Анчах та вӑл клевера вӑхӑтра пухса кӗртмен. Ҫавна пула колхоз клевер вӑрлӑхне 24 центнер мар, аран-аран 3 центнер кӑна шӗкӗлчесе илме пултарнӑ.

Пуриншӗн те паллӑ, нумай ҫул ӳсекен курӑксем акса йӗркеленӗ пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем курӑксем пысӑк тухӑҫлӑ пулсан кӑна тӑпра кӗрпеклӗхне лайӑхлатма пултараҫҫӗ. Апла пулсан, колхозсемпе МТС-сен уй-хирте акакан курӑксен тухӑҫлӑхӗшӗн ҫулсеренех тимлӗн кӗрешмелле, курӑксен тухӑҫлӑхне ӳстерсе пымалла. Тырпул тухӑҫлӑхӗ пысӑк пулсан тата выльӑх-чӗрлӗх валли апат ытлӑн ҫитлӗн тума пултарсан тин эпир пусӑ ҫаврӑнӑшне тӗрӗс йӗркелесе ҫитернӗ теме пултаратпӑр.

Колхозсем пусӑ ҫаврӑнӑшӗсене хӑвӑртрах йӗркелесе ҫитересси уй-хир бригадисемпе МТС механизаторӗсем ҫӗрӗҫне пӗрпӗринпе килӗштерсе тата тӗрӗс туса пынинчен, уйсенче ялхуҫалӑх культурисене тӗрӗс вырнаҫтарса акса пынинчен килет. Анчах та нумай МТС-сем халӗ ҫак организациллӗ ӗҫрен аякра тӑраҫҫӗ. МТС руководителӗсем колхозсенче тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем йӗркелес ӗҫе сахал хутшӑннине нумай тӗслӗхсемпе кӑтартса пама пулать. Вӗсене кура МТС агрономӗсем те, трактор бригадисен бригадирӗсем те ҫак ыйтусене татса парас тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ.

Машина-трактор станцийӗсене халӗ ялхуҫалӑх специалисчӗсен тӗп кадрӗсене панӑ. МТС руководителӗсемпе унта ӗҫлекен специалистсен нумай енлӗ колхоз производствин пур ыйтӑвӗсемпе те тӗплӗнрех интересленмелле. Колхозсене тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса пыма пулӑшмалла.

Ҫитес ик-виҫӗ ҫул хушшинче республикӑри пур колхозсем те тӗрӗс йӗркеленӗ пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине куҫса ҫитмелле. МТС руководителӗсемпе вӗсен агрономӗсем ҫак ӗҫри хӑйсен ответлӑхне туйса илме тивӗҫлӗ.

Халӗ МТС-сен кая юлса пыракан колхозсене авӑн ҫапса пӗтерме, ҫуракине хатӗрлениме тимлӗн пулӑшмалла. Республикӑри МТС-сем паха машинӑсемпе пуянланса пыраҫҫӗ. Вӗсен тырӑ сортласа тасатмалли хӑватлӑ машинӑсем ҫителӗклӗ. Ҫав машинӑсемпе тухӑҫлӑн усӑ курни кирлӗ. Уй-хире вырӑнти удобренисем турттарса кӑларас ӗҫре те машина-трактор станцийӗсен хӑйсен организациллӗ рольне чылай ӳстермелле. Ҫавӑн пекех МТС-сем колхозсене ялхуҫалӑх снабжени склачӗсенчен, чугун ҫул станцийӗсенчен минераллӑ удобренисем турттарса памалла, колхозниксене ҫав удобренисемпе усӑ курма вӗрентмелле.

Колхозсем халӗ 1953 ҫулта тырпул акмалли плансем тӑваҫҫӗ. МТС агрономӗсен колхозсен производство планӗсене тӑвас ӗҫе активлӑн хутшӑнмалла, колхоз председателӗсене тата бригадирӗсене пусӑ ҫаврӑнӑшӗсенче ялхуҫалӑх культурисене тӗрӗс вырнаҫтарма пулӑшас пулать.

Агрономсен творчествӑллӑ ӗҫлемелле. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес задачӑна вӗсем кашни колхозӑн хӑйне уйрӑм условийӗсене шута илсе пурнӑҫлама тивӗҫлӗ. Пусӑ ҫаврӑнӑшӗн таблици ҫине ҫиелтен пӑхмалла мар. Кирлӗ пулсан, ӑна тӳрлетни те кирлӗ. Калӑпӑр, нумай ҫул ӳсекен курӑксем ӑнӑҫлӑ пулмарӗҫ пулсан, вӗсем, тӗрлӗ сӑлтавсене пула, кӑҫал тухӑҫлӑ пулас ҫукки курӑнсах тӑрать пулсан, курӑксем акнӑ пусса ним тӑхтамасӑр хуҫалӑха усӑ кӳрекен ытти культурӑсем акмалла. Ҫирӗплетнӗ таблицӑна пӑхса ҫав пусса усӑсӑр выртарма юрамасть. Тепӗр пусӑра, калӑпӑр, нумай ҫул ӳсекен курӑксем ӑнӑҫлӑ пулнӑ, анчах та пусӑ ҫаврӑнӑшӗн таблици тӑрӑх унта курӑксем ӳстермелли вӑхӑт иртсе кайнӑ. Хӑшпӗр агрономсем ҫавӑн пек чухне, курӑк тухӑҫлӑ пулассине курах, ӑна сухаласа пӑрахма, таблицӑра кӑтартнӑ культура акма хушаҫҫӗ. Кун пек туни тӗрӗс пулмасть, вӑл пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем йӗркелес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхни пулать.

Яланах вӑйлӑ тырпул тата нумай ҫул ӳсекен курӑксем туса илмешкӗн агротехникӑллӑ ӗҫсен пӗтӗм комплексне ҫултан-ҫул пурнӑҫа кӗртсе пыни кирлӗ. Йӳҫӗк тӑпрасене извеҫпе юсамалла, известь тӑприне ҫунтарса уй-хире тӑкас ӗҫсене колхозсенче агрономсем пуҫарса пымалла. Вӗсемех пусӑ ҫаврӑнӑшӗсен пӗлтерӗшӗ ҫинчен колхозниксен массине тӑтӑшах ӑнлантарса памалла. Колхозниксене агротехника курсӗсенче вӗрентессине йӗркелесе пырасси те — МТС-сен куллен тумалли ӗҫӗ. Республикӑра тӗрӗс пусӑ ҫаврӑнӑшӗсем ҫине хӑвӑртрах куҫса пырас тӗлӗшпе МТС-сен колхозсенчи организациллӗ рольне ҫӗклемелле.

Р. ОСАНОВ,
Чӑваш АССР Ялхуҫалӑх министрӗн заместителӗ.

Редакцие килнӗ ҫыру

Ҫырӑннӑ хаҫата памаҫҫӗ

Иртнӗ ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗнче эпӗ 1953 ҫулта илсе тӑма «Коммунизм ялавӗ», «Ҫамрӑк коммунист», районти «Ҫӗнтерӳ ҫулӗ» хаҫатсем тата «Ялав» журнал ҫырӑнтӑм. Почтальон (ун чухне В. Фондеркин ӗҫлетчӗ) мана 40.351, 40.352, 40.353, 40.354 номерлӗ квитанцисем парса хӑварчӗ.

Анчах ҫӗнӗ ҫула кӗрсен (иртнӗ ҫулхи подписка срокӗ тухсан) хаҫатсем килме чарӑнчӗҫ. Эрне иртрӗ. Почтальон пӗр хаҫат та килсе памасть. Мӗн пулнӑ? Ҫӗнӗ почтальон ((малтанхине ӗҫрен хӑтарнӑ) мана хаҫат валеҫмелли списокра сирӗн ят ҫук, тет.

Аптранипе квитанцисене тӗрӗслеме юлташ урлӑ районти ҫыхӑну кантурне парса ятӑм. Чирлӗ пирки хам хӗллехи вӑхӑтра тухсах ҫӳрейместӗп. Эрне иртет. Халӗ ҫеҫ ӗҫлеме пуҫланӑ Р. Салайкина почтальон килет те: — Сирӗн ят нисӗта та ҫук. Кам урлӑ ҫырӑннӑ эсир, ыйтса пӗлме каласа ячӗҫ, — тесе квитанцисене парса хӑварчӗ.

Мӗнле-ха Союзпечатӗн районти организаторӗ Романов юлташ хӑш почтальонра мӗнле номерлӗ квитанцисем пуррине пӗлмест? Мӗншӗн вӑл ӗҫе тӗплӗн тӗрӗслеме, подписчиксемшӗн тӑрӑшма ӳркенет?

Ҫакна пулах районта хаҫат-журнал ҫырӑнтарасси япӑх пычӗ. Хӑшпӗр колхозсем ячӗшӗн ҫеҫ, пӗрер-икшер экземпляр кӑна ҫырӑннӑ. Колхозниксем хушшинче хаҫат-журнал илсе тӑракансем питӗ те сахал.

Районти ҫыхӑну кантурӗнчи работниксемпе почтальонсем хаҫат-журналсемпе ҫырусене вӑхӑтра ҫитерсе панине тӗрӗслемеҫҫӗ. Ҫакна пула нумай ҫынсен хаҫатсемпе ҫырусем ҫухални палӑрчӗ. Манӑн та иртнӗ ҫул 20 номер хаҫат «ҫухалчӗ». Почтальон япӑх ӗҫлени ҫинчен ҫыхӑну уйрӑмне пӗлтерсе тӑнӑ пулин те, нимӗнле мера та йышӑнмарӗҫ.

С. КРАСНОВ.

Питӗркасси ялӗ,
Хӗрлӗ Чутай районӗ.

„Коммунизм ялавӗ" хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн

„Трак разъездӗнче йӗркелӗх ҫук"

Ӗҫсынни депутачӗсен Красноармейски район Совечӗн исполкомӗ «Трак разъездӗнче йӗркелӗх ҫук» ятлӑ ҫырӑва («Коммунизм ялавӗ» хаҫатра 1952 ҫулти декабрӗн 31-мӗшӗнче пичетленнӗ) Супар ял Совет исполкомӗн ларӑвӗнче разъезд начальникӗпе Павлов юлташпа пӗрле сӳтсе явни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Ял Совет исполкомӗ Трак разъезчӗн начальникне Павлов юлташа пассажирсемшӗн кирлӗ пек тӑрӑшманшӑн асӑрхаттарнӑ, ҫитменлӗхсене кӗске вӑхӑтра пӗтерме хушнӑ.

* * *

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатра январӗн 24-мӗшӗнче пичетленнӗ «Суйлава хатӗрленмелли организациллӗ-техникӑллӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса ҫитерер» ятлӑ умстатьяра Советски районӗнчи уйрӑм ялсенче суйлав литератури ҫителӗксӗррине, ҫав вӑхӑтрах Советскинчи кӗнеке магазинӗнче литература выртнине кӑтартса панӑччӗ.

Чӑвашкниготорг ран статьяра ҫырни тӗрӗс пулни ҫинчен пӗлтерчӗҫ.

Советскинчи кӗнеке магазинӗн заведующине Рыжова юлташа суйлав литературине ӗҫсыннисем патне вӑхӑтра ҫитерсе паманшӑн ятланӑ.

Заем укҫине хӑвӑртрах пухса пӗтермелле

ҪӖМӖРЛЕ. Государство заемӗсене пирӗн совет ҫыннисем яланах пысӑк хавасл ӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ, государствӑна кивҫен укҫа парса хуҫалӑхпа культура строительствинче пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах заем сарнӑ вӑхӑтри политикӑллӑ ҫӗкленӳпе Ҫӗмӗрле районӗнче вӗҫне ҫитиччене усӑ курмаҫҫӗ. Заем сармалли кампани иртсен вара ҫырӑннӑ заем укҫине пухасси ытти мероприятисем хыҫне тӑрса юлать, ку ӗҫ ҫинчен сайра хутра кӑна аса илеҫҫӗ. Ҫавна пула паянхи кун тӗлне заем укҫине пухмалли плана районта пӗтӗмпе те 51,1 процент кӑна тултарнӑ. Пӗр ял Совечӗ те, пӗр колхоз тӑрӑх та заем укҫине пӗтӗмӗшпе пухса ҫитерни ҫук. Унтан та ытларах. Чылай ял Совечӗсем ҫуррине те пухса ҫитермен. Ҫапла, сӑмахран, Савадер ял Совечӗ заем укҫине пухмалли плана 21,1 процент, Кӑмаша ял Совечӗ—22, Вӑрманкас ял Совечӗ—23,9, Чӑваш Улхаш ял Совечӗ—24, Тӑванкас ял Совечӗ—30,1 процент кӑна тултарнӑ. Колхозсем тӑрӑх илсен, заем укҫине пухасси пушшех те начар пырать. Районти 29 колхозран 15 колхозра заем укҫине ҫуррине те пухса пӗтермен. Молотов ячӗпе, Свердлов ячӗпе тӑракан, «Победа», «Красный пахарь», «Авангард» колхозсенче ҫырӑннӑ хисепӗн 13—23 процентчӗ чухлӗ ҫеҫ укҫа пухнӑ.

Заем укҫине пухасси ҫакӑн пек начар пулса пыни чи малтанах ял Совечӗпе колхоз председателӗсем ку ӗҫе тивӗҫлипе хакламаннинчен килет. Вӗсем налог агенчӗсем ҫине шаннӑ та, урӑх нимӗнле мерӑсем те йышӑнмаҫҫӗ, ку ӗҫе ялти активва явӑҫтармаҫҫӗ, заем уполномоченнӑйӗсем мӗнле ӗҫленине тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ, вӗсене ӗҫре ертсе пымаҫҫӗ. Хӑшпӗр ял Совет тата колхоз председателӗсем, ку ӗҫа ертсе пырас е паха тӗслӗх кӑтартас вырӑнне, хӑйсем чӑрмантараҫҫӗ, заем укҫине тӳлес тӗлӗшпе государство умӗнче парӑмра тӑраҫҫӗ.

Анат Кӑмаша ял Совет председателӗ В. И. Леонтьев виҫӗ ҫул хушши ӗнтӗ ҫакӑн пек тӑвать: заемне ҫырӑнасса ҫырӑнать, укҫине вара пачах тӳлемест. Ҫапла вӑл 1950 ҫулта 100 тенкӗлӗх, 1951 ҫулта—300 тенкӗлӗх заем ҫырӑннӑ, икӗ ҫулӗнче те пӗр пус та тӳлемен. Иртнӗ ҫулхи заема (1952 ҫулхи кӑларӑм) вӑл 150 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Аран-аран 50 тенкине тӳленӗ. Ӑна кура ял Совет секретарӗ В. Мизуров юлташ та тӳлемест, вӑл та 150 тенкӗ вырӑнне 50 тенкине кӑна панӑ.

Анат Кӑмашари «Красный пахарь» колхоз председателӗ Ф. Виссаров юлташ 750 тенкӗлӗх, «Борец» колхоз председателӗ А. Ардвеньев—300 тенкӗлӗх, Калинин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ И. Николаев—250 тенкӗлӗх заем ҫырӑннӑ пулнӑ. Ҫак юлташсем ку тарана ҫитсе те заем укҫине пӗр пус та тӳлемен. Кӑмашари «1-ое мая» колхоз председателӗ Н. Толстов, «14 лет Октября» колхоз председателӗ В. Ичаков, «Новая жизнь» колхоз председателӗ В. Ефатеров, «Родина» колхоз председателӗ И. Чулах юлташсем те государство умӗнче пысӑк парӑмра тӑраҫҫӗ. Вӗсем кашниех 200—500 тенкӗ таран государствӑна заем укҫи тӳлеме тивӗҫлӗ.

Кашни ял Советӗнчех пухмалли заем укҫин пысӑкрах пайӗ актив ҫине лекет. Акӑ, тӗслӗхшӗн, Хутар ял Советнех илер. Заем ҫырӑннӑ 219 ҫынран 125 ҫын укҫине те пӗтӗмпех тӳлесе татнӑ. Ял Совечӗ тӑрӑх 4.500 тенкӗ ытларах пухмалли юлнӑ. Ҫак хисепрен 2 пин тенкине ытла активра тӑракан ҫынсем тӳлеме тивӗҫлӗ. Вӑл шутран колхоз председателӗн заместителӗ П. Спиридонов, колхоз счетовочӗ В. Шогин, бригадирсем А. Карпов, И. Шангеев, парторганизаци секретарӗ А. Шарщлыков юлташсем 150—250-шар тенкӗ таран тӳлемелле.

Ялсенче хӑйсен хуҫалӑхӗпе пурӑнакан учительсем, фельдшерсем, вулав ҫурчӗн заведующийӗсем те заем ҫырӑннӑ. Ҫырӑнасса ҫырӑнаҫҫӗ, анчах укҫине такам урӑххи тӳлессе шанаҫҫӗ пулас: ҫулталӑк хушшинче те парса татмаҫҫӗ. Чӑваш Улхашри вулав ҫурчӗн заведующийӗ Ф. Ортиков юлташ 200 тенкӗлӗх, учительсем Г. Милюткин юлташ—100 тенкӗлӗх, Н. Уфилькин юлташ—50 тенкӗлӗх, Магаринти вулав ҫурчӗн заведующийӗ В. Иванейкин юлташ 75 тенкӗлӗх заем ҫырӑннӑ, ку таранччен пӗр пус та хывман.

Ял Совет председателӗсем заем укҫине пухас ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслесе тӑманнине пула, заем укҫине пухма тивӗҫлӗ уполномоченнӑйсем хӑйсен ӗҫӗ ҫинчен пачах манса кайнӑ. Анат Кӑмашари «Красный пахарь» колхоз председателӗн заместителӗ М. Самарин юлташ — заем уполномоченнӑйӗ. Ял Совет председателӗ те, колхоз председателӗ те ку ял Советӗнче заем укҫине тӳлемен. Вӗсене кура М. Самарин юлташ хӑй те тӳлемест, укҫа пухас тӗлӗшпе хӑйӗн участокӗнче ӗҫлемест.

Чылай колхоз руководителӗсем колхозниксене укҫа тума май туса памаҫҫӗ е ӗҫкунӗпе тивекен укҫана памасӑр тытса тӑраҫҫӗ.

Заем укҫине пухас ӗҫ ҫине райсовет исполкомӗ те ҫиелтен пӑхать. Ҫак кунсенче ял Совечӗсемпе колхоз председателӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Чи малтан заем укҫине пухас ыйтӑва лартрӗҫ. Анчах ӑна сӳтсе яврӗҫ теме ҫук. Финанс пайӗн заведующийӗ Г. Яркин юлташ ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен кӗскен каласа пачӗ те, ҫакӑнпа сӳтсе явасси вӗҫленчӗ. Канашлура заем укҫине тӳлемесӗр чӑрмантарса пыракан ял Совет председателӗсем те чылайӑшӗ пулчӗҫ. Ыйтӑва сӳтсе явса, ку ӗҫри чӑрмавсемпе ҫитменлӗхсене пӗтерме мӗнле мерӑсем йышӑнмаллине палӑртмарӗҫ, ӗҫре чӑрмантарса пыракансене ҫивӗччӗн критиклени пулмарӗ.

Районти ӗҫсыннисем халӗ вырӑнти Советсен суйлавне хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсен ӗҫри тата политикӑллӑ активлӑхӗ пысӑк. Партипе совет органӗсен ҫак активлӑхпа усӑ курса, государство заемӗн укҫине суйлав кунӗ тӗлне пухса пӗтерессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешес пулать.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(«Коммунизм ялавӗ» корр.).

Тӗрӗслеме янӑ ҫырусем тӑрӑх

КПСС Красноармейски райкомӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, «Сталинец» колхозра культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе начар йӗркелени, колхозри комсомол организацийӗ кирлӗ пек ӗҫлеменни ҫинчен заметкӑра тӗрӗс ҫырнӑ.

Колхозри комсомол организацийӗн ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен колхозри комсомолецсен пухӑвӗнче комсомол райкомӗн секретарӗпе Митрофанов юлташпа пӗрле сӳтсе явнӑ. Хӑйне шанса панӑ ӗҫе туса пыманшӑн комсомол комитечӗн секретарьне Абрамов юлташа хытӑ ятланӑ. ВЛКСМ комитетне ҫӗнӗрен суйланӑ.

Район Совет исполкомӗн культурӑпа сутӗҫ пайӗ ялти клуб заведующийӗ пулма Александров юлташа уйӑрса лартнӑ.

Карай ялӗнче хӗрлӗ кӗтес уҫнӑ.

Ҫуракине хатӗрленеҫҫӗ

ИЕПРЕҪ. Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илесси ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе ҫитнинчен нумай килет. Ҫакна асра тытса, «Путиловка» колхоз членӗсем ҫуракине хатӗрленме хӗрӳллӗн тытӑнчӗҫ. Ҫуракинче акма кирлӗ чухлӗ вӑрлӑх хатӗрленӗ, ӑна икӗ хут сортласа складсене хывнӑ. Вӑрлӑхӑн шӑтас пахалӑхӗ аван.

Ялхуҫалӑх машинисене юсас, хире тислӗк кӑларас, вырӑнти ытти удобренисем хатӗрлес ӗҫсем те ӑнӑҫлӑ пулса пыраҫҫӗ. Захар тата Григорий Митрофанов тимӗрҫӗсем 11 плуг, 7 тимӗр сӳре, 2 сеялка юсарӗҫ, вӗсене ятарласа тунӑ сарая лартрӗҫ. Тислӗк кӑларас тӗлӗшпе конюхсем тата ферма работникӗсем кулленех ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем витесенчи тислӗке ҫийӗнчех хире кӑлараҫҫӗ, ӑна лайӑх ҫӗртӗр тесе пысӑк купасем тӑваҫҫӗ. Пурӗ хире 2.000 лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Колхоз ҫак кунсенче 100 тонна тӗрлӗрен минераллӑ удобренисем туянчӗ.

Колхозниксем вырӑнти Советсене суйламалли куна ҫуракине пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе ҫитсе, ҫитес ҫулта кашни гектартан 150 пӑтран кая мар ыраш, 120 пӑтран кая мар тулӑ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Н. КУДРЯВЦЕВ.

Ҫамрӑк авторсем

Пирӗн ҫамрӑксем хушшинче сӑвӑсемпе калавсем ҫырас туртӑм питӗ пысӑк. Ҫакӑн ҫинчен редакцие кулленех килсе тӑракан ҫырусем лайӑх каласа параҫҫӗ. Ҫамрӑк авторсем хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене илемлӗ чӗлхепе, вӗри туйӑмпа ҫырса кӑтартасшӑн, паллах, хӑйсен произведенийӗсене вӗсем пичетре курасшӑн. «Тӑван ҫӗршыв», «Ҫирӗп мир», «Аслӑ ҫулпуҫсем», «Коммунизмӑн чаплӑ стройкисем», «Колхозлӑ ял», «Индустриллӗ хула»—акӑ мӗнле темӑсем хавхалантараҫҫӗ ҫамрӑк авторсене.

Красноармейски районӗнчи Яманак ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Федор Иванов Кузбасра, Прокопьевск хулинче, горнопромышленнӑй шкулта забойщик пулма вӗренет, ҫав хушӑрах вӑл хӑйӗн вӑйхалне сӑвӑсем ҫырас тӗлӗшпе те виссе пӑхать. Вӗренӳри телейшӗн, ӗмӗт пурнӑҫланса пынишӗн, пархатарлӑ кунсулшӑн Иванов Коммунистсен партийӗне аслӑ Сталина тав тӑвать:

> Тавтапуҫ аттемӗре,
> Хӗвелӗмӗр Сталина.
> Пурнӑҫ пачӗ вӑл пире,
> Емӗрех мухтав ӑна!—тет вӑл.

Асӑннӑ районти Янкас ялӗнчи Илья Иванов та хӑйӗн ҫутӑ шухӑш-кӑмӑлне «Ҫулсерен ҫӗнел, ҫӗршывӑм» ятлӑ сӑввинче сӑнласа кӑтартма тӑрӑшать. Сарлака та пуян пирӗн Тӑван ҫӗршыв. Совет ҫынни ҫутҫанталӑка хӑйӗн ӗҫ-хакӑлне пӑхӑнтарать, каналсем уҫать, аслӑ шывсене пӗвелет, пушхирсенче хуласем туса лартать. Хӗпӗртесе ҫырать Иванов юлташ:

> Типӗ ҫилсене чаратпӑр
> Алхасма уй-хирсенче.
> Ҫӗнӗ вӑрмансем лартатпӑр
> Ҫеҫенхирӗн варринче.

Чурачӑк районӗнче вӗренекен Павел Васильев «Пӗлтӗрне» ятлӑ сӑввинче хӑллехи лӑпкӑ пейзажа ҫапла сӑнласа кӑтартать:

> Йӗлтӗр ҫӑмӑл, сывлӑш уҫӑ;
> Тем сарлакӑш таса хир.
> Хурӑн варӗ—анлӑ пусӑ,
> Сарнӑ тейӗн шурӑ пир.

Тӑван ҫӗршыв, тӑван колхоз, тӑван уй-хир ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсене ҫамрӑк авторсем хуть хӑҫан та мир темипе тачӑн ҫыхӑнтараҫҫӗ. Ҫакна эпир Латвирен М. Гусаров, Первомайски районӗнчен Н. Александров, Елчӗк районӗнчен М. Кадышев, Советски районӗнчен Н. Иванов ҫырнӑ сӑвӑсенче те куратпӑр. Асӑннӑ юлташсем мирлӗ пурнӑҫа мухтаҫҫӗ, вӑрҫӑ вутне тӗнчипех хускатса яма хӑтланакан ҫӑткӑн империалистсене ылханса питлеҫҫӗ, вулакансене ҫирӗп миршӗн кӗрешме чӗнеҫҫӗ. Красноармейски районӗнчен В. Харитонов «Чӑваш ҫынӗ вӑрҫа ылханать» ятлӑ сӑввинче ҫапла чӗнсе ҫырать:

> Халӑхсем, тачӑрах тӑрса тухӑр
> Сталинла мир ялавӗ айне!
> Ҫӗр ҫинче вӑрҫӑ вучӗ ан пултӑр,
> Курар мар пурнӑҫ кӗл пулнине.

Килнӗ сӑвӑсем хушшинче ҫӗнӗ ҫул ячӗпе ҫырнӑ сӑвӑсем те нумай. Иртнӗ 1952 ҫул чаплӑ та мухтавлӑ ӗҫсемпе палӑрса тӑрать. Анчах та хӑшпӗр ҫамрӑк авторсем ӗҫ процесӗнчи хавхалану ҫинчен мар, «тулли кӗреке», «тулли черкке» ҫинчен ытларах ҫыраҫҫӗ.

> Ҫӗнӗ ҫул кӗрекине.
> Тантӑшсем, пуҫтарӑнар.
> Тӑп тулли куркасене
> Савӑнса паян йӑтар.
> (Г. Лисин).

Тепӗр юлташ тата ҫакӑн пек те ҫырать:

> Савӑнса юрлар, ташлар,
> Пур ҫитменлӗхе манар.

Паллах, автор хӑй мӗн ҫырни ҫинчен тӗплӗн шухӑшласа пӑхман. Кашни сӑмаха виҫсе, ун пӗлтерӗшне чухласа ҫырнӑ пулсан, вӑл ҫакӑ пысӑк йӑнӑша тӑвас ҫукчӗ.

А. Прокопьевпа Ф. Андреев юлташсем вырӑсла сӑвӑсене куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлесе пӑхнӑ. Ҫак юлташсем куҫару ӗҫӗ кӑткӑс иккенне шута илмен, произведение пӗр чӗлхерен тепӗр чӗлхене куҫарас принципсемпе паллашман, тӑван чӗлхе ҫаврӑнӑшӗсене пӑхӑнман. Вӗсем оригиналти сӑвӑ йӗркисене сӑмах хыҫҫӑн сӑмах куҫарса пынӑ. Тӗслӗхшӗн Ф. Андреев белорус поэчӗн А. Кулешевӑн «Чӗрӗ Ленин» ятлӑ сӑввине мӗнле куҫарнине илсе кӑтартӑпӑр. Пуҫламӑш строфана илетпӗр:

> Асату маршӗпе Колоннӑй зал янранӑ,
> Хӗл тӗтринче ҫуннӑ кӑватсем Мускавра.
> Ильич ҫине хурлӑн ялавсем эпир тайнӑ,
> Ҫапах ҫӗре парас темен эпир ӑна.

Халӗ ҫакна вырӑсла текстпа танлаштарса пӑхар:

> Когда прощальный марш звучал
> в Колонном зале
> И по Москве костры горели в зимней
> мгле,
> Над Ильичем, скорбя, знамена мы
> склоняли,
> Но не желали мы отдать его земле.

Ҫак йӗркесене хумханмасӑр вуласа иртме ҫук. Кунта кашни сӑмах хӑй вырӑнӗнче, ритм та ҫирӗп, рифмӑсем те янравлӑ. Анчах та чӑвашла куҫарни вулакана ҫырлахтараймасть: куҫаракан оригиналӑн ритмне тытса пырайман, ҫавӑн пирки сӑмах пусӑмӗсем вырӑнсӑр лараҫҫӗ тата сӑвӑ янравлӑхне ӳстерекен элементсем—рифмӑсем ҫук. Куҫараканӑн, тӑван чӗлхе пуянлӑхӗпе пур енчен те усӑ курса, произведени шухӑшне те тата формине те упраса хӑвармалла. Ҫавӑн чух тин куҫарнӑ ӗҫ оригиналпа танлашма пултарать, вулакансен кӑмӑлне килме пултарать.

Ҫамрӑк авторсенчен нумайӑшӗсем хӑйсен сӑввисенче пӗтӗмӗшле темӑсене ҫутатса пама тӑрӑшаҫҫӗ. Ку вӑл аван япала, анчах та ҫав сӑвӑсенче витӗмлӗ сӑмах, пысӑк хумхану, чӗрӗ сӑн ҫук. Ҫавӑнпа та ҫамрӑк авторсен конкретлӑ темӑсем ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхас пулать, пысӑк шухӑша, пысӑк кӑмӑл-туйӑма пурнӑҫри уйрӑм явленисем урлӑ кӑтартса парас пулать. Ку тӗлӗшпе А. Егоров (Шупашкар районӗ), В. Игнатьев (Шупашкарти пединститут), О. Сазонов (Елчӗк районӗ), Б. Порфирьев (Пенза облаҫӗ), И. Миронов (Куславкка районӗ) тата ытти нумай юлташсем те тӗрӗс тӑваҫҫӗ. Вӗсем пурнӑҫри конкретлӑ фактсене илеҫҫӗ, вӗсене лайӑх тӗпчесе, чун-чӗрепе туйса сӑнлама пикенеҫҫӗ.

Акӑ А. Егоровӑн «Верук аппа» ятлӑ сӑввин пуҫламӑшӗ:

> Тӗттӗмленсен, ялта Ильич лампийӗ
> Ҫунма пуҫлать те йӑлтӑр ҫутӑпа,
> Чӗриклетсе юлан шап-шур юр ҫийӗн
> Утса пырать клуба Верук аппа.

И. Миронов «Агитпунктра» сӑввинче агитатор сӑнне ҫапла сӑнласа кӑтартать:

> Ҫамрӑк агитатор
> Калаҫать, тӑнланӑр
> Ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑх ырлӑхӗ ҫинчен.
> Кӑкринче ҫут орден
> Йӑлкӑшать илемлӗн,
> Курӑнать хӗвел пек ҫав тери хитрен.

Ҫамрӑк сӑвӑҫсен пултарулӑхӗнче пӗр пысӑк ҫитменлӗх пур: вӗсем сӑвӑ ҫырмалли йӗркесене ҫителӗксӗр пӗлеҫҫӗ, сӑвӑ кӗввине—унӑн ритмне ҫирӗп тытса пымаҫҫӗ, час-часах рифмӑсем тумаҫҫӗ. Паллах, тӑван чӗлхе пуянлӑхӗпе усӑ курмасан, чӗлхене тӑтӑшах ҫивӗчлетсе пымасан, ӑсталӑха ҫине тӑрсах ӳстермесен, лайӑх сӑвӑсем ҫырма ҫук. И. Миронов сӑввинчен илсе кӑтартнӑ тӗслӗх чиперех янрать, чиперех илтӗнет пек, анчах та ҫав ултӑ йӗркене пулса ҫитнӗ теме ҫук.

Килнӗ сӑвӑсем хушшинче грамматикӑпа поэтикӑна нихӑш енчен те пӑхӑнман, хисеплемен алҫырӑвӗсем те йышлӑн тӗл пулаҫҫӗ. Акӑ пӗр тӗслӗх, ӑна эпир авторӗ ҫырнӑ пекех илсе кӑтартатпӑр:

> Куҫпа виҫейми, ман колхозӑн ҫаранӗ,
> Пӗр вӗҫрен тепри, пӑхса курӑнмасть.
> Иртет юхан шывӗ ҫурса айлӑма,
> Кунти ҫутҫанталӑк мана, каять кӑмӑла.

Юрӗ, ритмпа рифмӑсем ҫукки пирки питех шарламӑпӑр, анчах сӑвӑ ҫырма тытӑннӑ ҫыннӑн запятойсене хӑй вырӑнне лартма пӗлмеллех ӗнтӗ! Ан тӗлӗнӗр, ҫак тӑватӑ йӗркене В. Д. учитель ҫырнӑ. Хӑй вӑл физикӑпа математикӑна вӗрентет, чӗлхе предметне хисеплесех каймасть курӑнать. Паллах, ку майпа нимӗнле сӑвӑ та ҫырӑнмасть!

Ҫамрӑк авторсем час-часах хӑйсен черновикӗсене ярса параҫҫӗ. Хӑйсен ӗҫне тирпейлӗ тумаҫҫӗ. Алҫырӑвӗ вӑл темиҫе хут ҫырса илмесен, юсамасан, якатмасан,—юрӑхлӑ пулмасть. Классиксем хӑйсен сӑввисене кӑна мар, романӗсене те сич-сакӑршар хут ҫырса илнӗ, вӗҫӗмсӗр юсанӑ, тӳрлетнӗ. Пирӗншӗн вӗсен ӗҫӗ тӗслӗх пулса тӑмалла. Сӑвӑҫа куллен ӳсни, вӗренни, тарӑн туйни, пурнӑҫпа тан утни, малашлӑха витӗр курни кирлӗ. Унсӑрӑн сӑвӑҫ пулма майӗ ҫук.

Ҫамрӑк авторсем хушшинче калав ҫыракансем те сахал мар. Вӗсен йышӗ те кулленех ӳсце пырать. Ҫамрӑк калавҫӑсем коммунизм строителӗсен сӑн-сӑпатне, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне, ӗҫри хастарлӑхне, килйышри, юратури ҫӗнӗ ҫыхӑнусене кӑтартса пама тӑрӑшаҫҫӗ. Ку ӗҫре вӗсем, паллах, хӑйсен малтанхи утӑмне кӑна тунӑ-ха. Ӳсесси, ҫӑнласах ҫырас тесе ҫунасси, чӗлхене тӗпчесе вӗренесси, сюжет, образ тума пӗлесси—кулленхи ӗҫ, йывӑр та кӑткӑс ӗҫ. Ҫакна кашни ҫамрӑк калавҫӑн асра тытас пулать, пурнӑҫа кӗртес тесе ҫине тӑрсах ӗҫлес пулать. Ларам та ҫырам тенипе калав ҫырӑнмасть.

И. Петров (Шупашкар хули) «Асатте» ятлӑ калавӗнче ӗлӗкхи суйлавсем мӗнле пулса иртни ҫинчен каласа парать. Тӗттӗм чӑваш ялӗнче ял старостине суйламалла. Ҫӗрме пуян Нестр ялти чухӑнсене хӑй май ҫавӑрма тытӑнать: сӑнӑх, вӑрлӑх, укҫа парать, юлашкинчен вӑйлӑ ӗҫкӗ туса ирттерет, ҫапла майпа старостӑна «суйланать». Калаври ӗҫсем ытла та ҫӑмӑл пулса пыраҫҫӗ. Автор чухӑнсемпе пуянсем хушшинче хаяр кӗрешӳ пыни ҫинчен маннӑ, вӑл ӑна пӗртте сӑнласа паман. Автор хӑй калавне вырӑнти Советсен суйлавӗ тӗлне ҫырнӑ. Апла пулсан, унӑн сталинла аслӑ правасемпе усӑ куракан совет суйлавӗсен сӑн-сӑпатне кӑтартса памалла пулнӑ.

Ҫамрӑк калавҫӑсем хӑйсен геройӗсене час-часах пӗр енчен кӑна кӑтартаҫҫӗ. Акӑ «Роман мучи тарӑн шухӑша путрӗ» ятлӑ калав. Ӑна Ульяновск облаҫӗнчи Инза районӗнчен С. Игнатьев ҫырса янӑ. Автор Роман мучин ӗлӗкхи асаплӑ пурнӑҫне чиперех кӑтартнӑ тес пулать, анчах та вӑл геройӑн паянхи сӑнне питӗ имшер ӳкерсе панӑ. Тӗрӗсрех каласан, калавран хроника ҫеҫ пулса тухнӑ, автор Роман мучин биографине ҫеҫ каласа панӑ, ӑна та паянхи куна ҫитереймен.

П. Сорокин (Канаш хули), Н. Абунеров (Чкаловски районӗ), Л. Исаков (Калинино районӗ), А. Сорокин (Советски районӗ), Г. Краснов (Ҫӗрпӳ хули) тата ытти юлташсем те калав ҫырас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен теми—колхозлӑ ял тематики. Анчах та асӑннӑ авторсен калавӗсем уйрӑм заметка шайӗнчен ҫӳлех хӑпараймаҫҫӗ. Вӗсене шухӑша каласа пама, геройсен сӑнне кӑтартма, сюжетпа форма тума, илемлӗ чӗлхепе ҫырма пӗлейменни чӑрмантарать.

Халь ҫеҫ ҫырма тытӑннӑ ҫамрӑк сӑвӑҫсемпе калавҫӑсен хӑйсен политикӑпа художествӑллӑ пӗлӳлӗхне тӑтӑшах ӳстермелле, пурнӑҫа тӗплӗн сӑнамалла, сӑн (образ) тума вӗренмелле.

Стихван ШАВЛЫ.

Гоби пушхирĕнчи çĕнĕ хула

ПЕКИН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Дихуаран (Урумчи) çапла пĕлтерет:

Гоби пушхирĕнче Атуш ятлă çĕнĕ хула ўссе ларнă. Вăл Тяньшань тăвĕсенчен кăнтăртарахра, Кашгар хулинчен 50 километр çурçĕртерехре, Синьцзян провинцийĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче вырнаçнă. Икĕ çул каярах кунта шывсăр пушхир сарăлса выртнă, нимĕнле ўсентăран та ўсмен. Хальхи вăхăтра хулара 300 ытла çурт туса лартнă тата çĕршер çуртсем çĕнĕрен тăваççĕ. Атуш хулине провинци столиципе—Дихуа хулипе тата Кашгар хулипе телеграфпа телефон линийĕсемпе çыхăнтарнă. Хулана апатçимĕç продукчĕсем сутма вуншар пин хресченсем, çавăн пекех инçетри районсенчен сутуçăсем пыраççĕ. Хулара Кашгарти государство суту-илў компанийĕн уйрăмне тата кооперативсем аллинче тăракан нумай магазинсем уçнă.

Пушхирте ўссе ларнă Атуш хули ку районăн экономикăллă центрĕ пулса тăнă. Хулара персик тата груша йывăççисем лартса ўстереççĕ.

РУМЫНИРИ НАУКА АКАДЕМИЙĔН БИБЛИОТЕКИ

БУХАРЕСТ, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири Наука академийĕн библиотекине юлашки пилĕк çул хушшинче пĕтĕмпех çĕнетсе йĕркеленĕ тата чылай аслăлатнă. Библиотека çĕршыври культура центрĕсенчен пĕри пулса тăнă. Унта темиçе миллион кĕнеке, журналсем, документсем, алçырăвĕсем, илемлĕ литература, наукăпа техника литературин сайра тĕл пулакан изданийĕсем пур.

Библиотекăна студентсем, рабочисемпе служащисем, наука работникĕсем пыраççĕ. 1952 çулта библиотекăран кĕнекесем илсе вулакансен хисепĕ 118 пин çынна çитнĕ. Çак вăхăт хушшинче вулакансене 353 пин кĕнеке панă, ку вăл 1948 çулхинчен виçĕ хут ытларах пулать. Вулама панă кĕнекесем хушшинче Совет Союзĕнчи авторсен кĕнекисем 52 пин, Совет Союзĕнче тухакан журналсем 40 пин экземпляр пулнă.

Библиотекăри кĕнекесемпе документсен фончĕ пĕрмаях ўссе пырать.

АЛБАНИПЕ ВЕНГРИ ХУШШИНЧЕ СУТУ-ИЛЎ КИЛĔШĔВĔ ТУНĂ

ТИРАНА, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири хаçатсем Тиранăра Албани Халăх Республикипе Венгри Халăх Республики хушшинче 1953—1955 çулсенче тавар улăштарса тăрасси çинчен тата тўлевсем çинчен тунă килĕшў çине алă пусни çинчен пĕлтереççĕ.

Суту-илў килĕшĕвĕ икĕ çĕршыв хушшинче тавар улăштарассине вăйлатса пыма палăртать, икĕ çĕршыври халăхсен туслăхне тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине малалла та çирĕплетсе пыма пулăшать.

Албани Халăх Республики Венгрие пăхăр, хром, тир-сăран, табак, улма-çырла парса тăмалла. Венгри Албание фабрикăсемпе заводсем валли оборудовани тата строительствăра кирлĕ машинăсем, кабель, электропромышленность туса кăларакан тĕрлĕ изделисем, медикаментсем, алюмини, тĕштырă тата ытти таварсем те парса тăрать.

ФИНЛЯНДИРЕ ХАКСЕМ ЎСЕÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, аш-какай хакĕ пĕр килограмм пуçне каллех 5—20 марка чухлĕ ўснĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 5-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ўкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

Корея Халăх çарĕ 5 çул тултарас умĕн

ПХЕНЬЯН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Корея Халăх çарне тунăранпа февралĕн 8-мĕшĕнче 5 çул тултарать. Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи ĕçсынисем çак куна паллă тума пысăк çĕкленўпе хатĕрленеççĕ. Республикăри пур районсенче те уяв иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсем тунă. Уяв умĕнхи кунсенче ĕçсынисем фронта вуншар пин парнесем, çырусемпе саламлă ялавсем ярса параççĕ. Ку вăл çарпа халăх хушшинче çирĕп çыхăну пулни тата ĕçсынисем çара юратни çинчен калать. Тяган провинцийĕнчи Чжанган уездĕнче пурăнакансем кăна январĕн иккĕмĕш çур уйăхĕнче фронта 5 пин посылкăпа парне янă. Фронт çывăхĕнчи Хванхэ провинцийĕнче пурăнакансем Халăх çарĕн боецĕсемпе офицерĕсем патне уяв умĕн 100 пин саламлă çыру янă. Кэсон районĕнче пурăнакансем темиçе концерт бригади организациленĕ. Концерт бригадисем çак района хўтĕлекен боецсем патĕнче концертсем параççĕ. Корейăри демократиллĕ çамрăксен Союзĕ республикăри мĕнпур хуласемпе ялсенчи шкулсенче кружоксем организациленĕ. Çав кружоксенче çамрăксем Демократиллĕ Корея Халăх Республикин геройĕсен биографийĕсене вĕренеççĕ, ун хыççăн геройсен вилĕмсĕр паттăр ĕçĕсем çинчен ĕçсынисене каласа параççĕ. Пхеньянри радиокомитет Демократиллĕ Корея Халăх Республикин геройĕсене хисеплесе литературăпа художество уйăхлăхĕ ирттерет. Халăх çарĕн чаплă юбилейне паллă тума хатĕрленнĕ кунсенче, Корея Халăх çарĕ 5 çул тултарнă ятпа, çар чаçĕсенче, учрежденисемпе предприятисенче, шкулсенче, хуласемпе ялсенче савăнăçлă пухусем пулса иртеççĕ.

АМЕРИКА САЛТАКĔСЕМ ÇАРТАН ТАРАÇÇĔ

ВЕНА, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Венăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕнче Америкăн çар полицийĕ Америкăн 2 салтакне арестленĕ. Çав салтаксем Зальцбургра тăракан хăйсен чаçĕнчен тарнă пулнă. Арестленĕ чухне салтаксем хирĕç тăнă. Çавăнпа та вĕсене, хаçатсем кăтартса панă тăрăх, «куççуль юхтаракан газ пулăшнипе лăплантарма тивнĕ».

Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Совечĕн сессийĕ уçăлнă

ПРАГА, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Прага хулинче Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Совечĕн сессийĕ уçăлнă. Сессие 62 çĕршывран 200 яхăн делегат, хăнасемпе сăнавçăсем пухăннă. Хăнасем хушшинче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн тата пĕтĕм тĕнчери ытти организацисен представителĕсем пур. Сесси ĕçне совет çамрăкĕсен делегацийĕ хутшăнать. Ăна фашизма хирĕç кĕрешекен совет çамрăкĕсен комитечĕн председателĕ, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн секретарĕ В. Кочемасов ертсе пырать.

Делегатсем пĕр кăмăллă пулса сессин çакăн пек кун йĕркине йышăннă:

1) Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери черетлĕ, виççĕмĕш конгресне пухасси çинчен. Докладчик—Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Ж. Дени (Франци).

2) Çамрăксемпе студентсен пĕтĕм тĕнчери тăваттăмĕш фестивальне ирттересси çинчен. Докладчик—Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретарĕ В. Коцев (Болгари).

3) Халăхсен мире хўтĕлес тĕлĕшпе пулса иртнĕ Конгресĕн итогĕсем тата Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен. Докладчик—Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретарĕ Ф. Моранино (Итали).

Ун хыççăн кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Жак Дени тухса каланă.

Доклад хыççăн пренисем пуçланнă.

Çурçĕр тинĕсĕнче каллех вăйлă çил-тăвăл пулнă

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гаага хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 4-мĕшĕнче çĕрле Çурçĕр тинĕсĕнче тепĕр хут вăйлă çил-тăвăл тухнă. Çил-тăвăл ир енне лăпланнă. Ворне çурутравĕ çинчи икĕ ялăн—Оуде Тонге тата Ниве Тонге ятлă ялсен лару-тăрăвĕ «питĕ йывăр» шутланнă. Çил-тăвăллă çанталăка пула çĕрле вăл ялсенчи халăха пăрахутсемпе те, самолетсемпе те урăх вырăна куçарма май килмен.

Голландири телеграф агентстви юлашкинчен пĕлтернĕ сведенисем тăрăх, Голландире шыв илнине пула çак вăхăтчен 1.272 çын вилнĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, информаци агентствисем пĕлтернинче çапла каланă: шыв илнĕ районсенче тăрса юлнă çынсене чир-чĕрсем пуçланасси хăратса тăрать. Çынсем сивĕ пирки тата апат-çимĕç çителĕксĕр пулнă пирки вăйсăрланса çитнĕ.

Хильверсумри радио пĕлтернĕ тăрăх, шыв илнине пула пĕр миллион çын ытла сиен курнă.

США-ри Коммунистсен партийĕн 13 руководителĕ тĕлĕшпе йышăннă приговор

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян федеральнăй судья Димок США-ри Коммунистсен партийĕн 13 руководителĕ тĕлĕшпе приговор йышăннă. Вĕсене Смит законне пăснă тесе айăпланă.

Элизабет Гарли Флинна, Петтис Перрине, Александр Биттлмана, Александр Трахтенберга, Уильям Уэйнстоуна, В. Дж. Джерома тата Арнольд Джонсона 3-шер çуллăха тĕрмене хупмалла, кашнинех 6.000-шер доллар штраф тўлеттермелле тунă. Бетти Ганнета, Альберт Лэннона, Луис Вейнстока, Джекоб Майндла тата Джордж Блэйк Чарнине 2-шер çуллăха тĕрмене хупмалла, кашнинех 4.000-шер доллар штраф тўлеттермелле туса приговор йышăннă. Клодия Джонса 1 çултапа та 1 кунлăха тĕрмене хупмалла, 2.000 доллар штраф тўлеттермелле тунă.

США сенатĕнче

ВАШИНГТОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Пир-авăр туса кăларас тата ăна сутас тĕлĕшпе ĕçлекен «Дж. П. Стивенс энд компани» ятлă пысăк компани пуçлăхне тата ытти темиçе пысăк компанисен директорне Роберт Стивенса США-н çар министрĕ пулма уйăрса лартнине ĕнер США сеначĕ ырланă. Сенат çавăн пекех «Дженерал мидконтинент ойл энд гэз Ассошиэйшн» компани тата ытти нефть компанийĕсен директорне Роберт Андерсона США-н тинĕс министрĕ пулма уйăрса лартнине çирĕплетнĕ.

БОЛИВИРЕ ÇЫНСЕНЕ АРЕСТЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Арикирен (Чили) пĕлтернĕ тăрăх, Ла-Пасри (Боливи) радио Боливире çынсене нумай арестлени çинчен пĕлтернĕ. Арестленисем хушшинче çар офицерĕ пулнă 110 çын пур.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ШАХМАТ ТУРНИРĔНЧЕ

БУХАРЕСТ, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕн 8-мĕш вăййине ирттернĕ. Совет Союзĕн çамрăк шахматисчĕ Спасский Штольцпа (Швеци) тĕл пулнă. 32 хут çўренĕ хыççăн шахматистсем пĕрне-пĕри çĕнтереймен тесе йышăннă. Шайтар (Чехословаки) тата Смыслов (СССР) çавăн пекех пĕрне-пĕри çĕнтерейمен.

Филиппа (Чехословаки) Болеславский (СССР) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă. Ку партире совет гроссмейстерĕн выляса илме шанчăк пур. Совет шахматисчĕсем Толушпа Петросян хушшинчи тĕлпулу пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Румыни мастерĕ Ш. Сабо Венгри гроссмейстерне Л. Сабона çĕнтернĕ.

Румыни чемпионĕ Чоколтя Троянескуран (Румыни) выляса илнĕ. Сливапа (Польша) О'Келли (Бельги) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă.

Барца (Венгри) вăйлă кĕрешў хыççăн Голомбека (Англи) çĕнтернĕ.

Рэдулеску (Румыни), ĕнер Румыни чемпионне Чоколтяна çĕнтернĕскер, Милевпа (Болгари) тĕл пулнă. Партие тепĕр вăхăта хăварнă. Милевăн икĕ пешка ытларах.

Рейхерпа (Румыни) Барда (Норвеги) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă. Бардан выляса илме шанчăк пур.



Мускав. Совет Çарĕн Центральнăй çуртĕнче тĕнче чемпионĕ гроссмейстер М. Ботвинник (Мускав) тата гроссмейстер М. Тайманов (Ленинград) ССР Союзĕн 1952 çулхи шахмат чемпионĕ ятне илессишĕн ăмăртса вылянă. Ăмăртура М. Ботвинник мала тухнă, ССР Союзĕн 1952 çулхи шахмат чемпионĕ ятне илнĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. Ботвинник (сулахайри) тата М. Тайманов шахматла выляççĕ.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

М. Ботвинник—ССР Союзĕн шахмат чемпионĕ

ССР Союзĕн шахмат чемпионĕ ятне илессишĕн М. Ботвинникпа М. Тайманов гроссмейстерсем хушшинче пулнă ăмăртура улттăмĕш партине февралĕн 5-мĕшĕнче выляса пĕтернĕ.

42 хут çўренĕ хыççăн, выляса илме шанчăк çуккине кура, Тайманов гроссмейстер Ботвинника пĕрне-пĕри çĕнтереймен тесе йышăнма сĕнў панă. Ку сĕнĕве Ботвинник йышăннă.

Çапла ăмăртура Ботвинник гроссмейстер çĕнтернĕ. Вăл 3,5 очко, Тайманов гроссмейстер 2,5 очко пухнă.

Февралĕн 5-мĕшĕнче Совет Çарĕн Центральнăй Çуртĕн концертсем ирттерекен залĕнче шахмат ăмăртăвĕ хупăннă. СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн председателĕн заместителĕ Песляк юлташ СССР чемпионне Михаил Ботвинник гроссмейстера çĕнтерў тунă ятпа саламланă. Песляк юлташ Ботвинника пĕрремĕш степень диплом тата чемпионăн ылтăн медальне панă. М. Тайманов гроссмейстера иккĕмĕш степень диплом тата кĕмĕл жетон панă.

М. Ботвинникпа М. Тайманов кĕске сăмах тухса каланă. Вĕсем вĕçленнĕ ăмăрту çинчен хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа панă.

Михаил Ботвинник СССР чемпионĕн ятне халиччен улттă хутчен—1931, 1933, 1939, 1941, 1944, 1945-мĕш çулсенче илнĕ тата кăçал çиччĕмĕш хут илнĕ. М. Ботвинник Совет Союзĕнчи ХХ-мĕш шахмат чемпионатĕнче питĕ пысăк çитĕнў туни тата юлашки ăмăртура Тайманова çĕнтерни вăл шахмат искусстви енĕпе пысăк ĕç туни çинчен калать. Тĕнче чемпионĕ юлашки çул хушшинче шахмат искусствинче теори тата творчество енĕпе нумай тăрăшса ĕçленĕ.

Çакна палăртмалла: М. Тайманов шахмат искусствинчи пултарулăхне чи малтан Ленинградри Пионерсен дворецĕнчи ачасен шахмат шкулĕнче кăтартнă. М. Ботвинник çав шкул руководителĕ пулнă. 14 çул иртнĕ хыççăн тĕнче чемпионĕ М. Ботвинник тата Ленинград чемпионĕ М. Тайманов, вĕрентекенпе вĕренекен, çĕршыв чемпионĕ ятне илессишĕн иккĕшĕ тĕл пулса вылярĕç. Ку ăмăртура М. Тайманов хăй питĕ чаплă стратег, ăста шахматист пулнине кăтартса пачĕ.

Çамрăк гроссмейстер М. Тайманов Совет Союзĕн ХХ-мĕш шахмат чемпионатĕнче тунă хисеплĕ результат пирĕн çĕршывра çамрăк талантсем вĕçĕмсĕр ўссе пынине кăтартса парать.

(ТАСС).

Ялти лектори

СОВЕТСКИ. Турай ялĕнчи клуб çумĕнче çичĕ çул хушши ĕнтĕ ялти лектори ĕçлет. 15 лектортан чылайăшĕ çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем.

Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май лектори ятарласа план тунă. Ĕç планĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Çак кунсенче ялти лекторсем тăхăр лекци тата 16 доклад ирттерчĕç.

Ф. Николаев юлташ агитаторсемпе суйлавçăсем валли темиçе лекци вуласа пачĕ.

Н. Петров лектор суйлавçăсем валли «ССР Союзĕнчи граждансен прависемпе обязанноçĕсем» темăпа виçĕ лекци ирттерчĕ.

Кунти лекторсем Чемей, Тойшево тата Чураш ял Совечĕсенче те лекцисем вуласа параççĕ.

В МИХАЙЛОВ.

Çĕнĕ спектакль

Вырăсла драма театрĕн коллективĕ А. Н. Островский çырнă «Невольницы» пьесăна лартса пачĕ. Спектакле Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Мудров хатĕрленĕ. Художникĕ—В. Гунько.

Спектакльти тĕп рольсене республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕсем А. Гусев, М. Каширская, çавăн пекех Г. Гусев, И. Николаевская, Л. Шапошникова, В. Калочников, В. Антонов, А. Григорова тата ытти артистсем выляççĕ.

Н. ЭЛЛЕ.

„Красная звезда" спорт обществинче

Шупашкарта «Красная звезда» спорт обществинче шахмат енĕпе мала тухмалли республикăри ăмăрту пулса иртрĕ. Унта 14 шахматист хутшăнчĕ.

Ăмăрту «Красная звезда» спорт обществи членĕсем хушшинче шахмат спорчĕ анлăн сарăлнине, çак енĕпе чылай çитĕнўсем тунине палăртма пулăшрĕ. Çамрăк шахматист Воронков юлташ, турнирта иккĕмĕш разрядри Кочетков шахматистран çур очко кăна каярах пухса, виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

Темиçе кун ăмăртса вылянă хыççăн А. Сиротин 13 очкоран 12,5 очко илсе пĕрремĕш вырăна тухнă. Иккĕмĕш вырăнта Кочетков (Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ).

Кĕнеке почтăпа каять

г. Чебоксары, «Книга-почтой». Çак адреспа Шупашкарти Карл Маркс урамĕнчи 43-мĕш çурта куллен вуншар çыру килет. Ирхине, 9 сехетре, почтăпа кĕнекесем ярса паракан уйрăмра ĕçлекенсен ĕç кунĕ çав çырусене пăхса тухнипе пуçланать.

Çырусене вулама кĕнеке магазинĕнче ĕçлекенсем те пыраççĕ. Аçтан мĕнле кĕнекесем ыйтни пурне те интереслентерет.

— Чита облаçĕнчен В. Григорьев çырать. Вăл чăвашла кĕнекесем—РСФСР Конституцине, партин XIX-мĕш съездĕнче И. В. Сталин юлташ тухса каланă сăмаха, Г. М. Маленков, М. З. Сабуров, Н. С. Хрущев юлташсен доклачĕсене, КПСС Уставне ярса пама ыйтать,—тет уйрăм заведующийĕ К. И. Васильева. Вăл хăйпе ĕçлекен Л. Филипповăна халех çав кĕнекесене тупса посылка туса çыхма пулăшать.

«Хабаровск хулинче чăвашсем нумай ĕçлеççĕ. Эпир чăваш хорĕ тăвасшăн. Чăвашла юрăсен кĕнекине ярса пама ыйтатпăр»,—тесе çыраççĕ темиçен алă пуснă çырура. Кĕнеке магазинĕсенче юрă кĕнекисене тупма çăмăлах мар, анчах инçетри туссен ыйтăвне мĕнле пулсан та тивĕçтермелле. «Книга-почтой» уйрăмĕнче ĕçлекенсем çак кĕнекесене тупма тăрăшаççĕ.

— Эпĕ Красноярск крайĕнче Назаровски районти «Канаш» колхозра пчеловод пулса ĕçлетĕп. Пирĕн икĕ утар. Эпĕ ĕçлекен утартан кăçал пыл сахал илтĕмĕр. Сăлтавне пĕлеймерĕм Хурт-хăмăр ĕрчетесси çинчен вырăсла çырнă кĕнекесене йăлансах çитерейместĕп. Чăвашла кĕнеке ярса парăр. Эпĕ 72 çулти колхозник Никифор Герасимович Кузнецов,—тесе çырать тахçан кунтан куçса кайнă колхозник. Ыйтнă кĕнекесене çийĕнчех тупса почтăпа ярса параççĕ.

Алма-Ата хулинчен икĕ доцент Хайрулла Махмедовпа Наминханов Церен-Доржи вырăсла-чăвашла словарь, И. В. Сталин биографине тата чăвашла ытти кĕнекесене илни çинчен çырса пĕлтереççĕ, вĕсемшĕн чĕререн тав туса, çĕнĕ кĕнекесем ярса пама ыйтаççĕ.

Совет Çарĕнчен генерал-майор çырать. Вăл хăй командир пулса ертсе пыракан чаçри чăваш салтакĕсем валли политикăллă чăвашла кĕнекесем, илемлĕ литература произведенийĕсем ярса пама ыйтать.

Аçтан кăна çырмаççĕ пулĕ «Книга-почтой» уйрăмне! Тутар, Мордва, Пушкăрт, Мари республикисенчен, Ульяновск, Чкалов, Куйбышев, Свердловск облаçĕсенчен, Узбекистанран, Таджикистанран, Азербайджанран, Литваран, Латвирен, Грузирен, Мускавран—Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенчен те çырусем килеççĕ. Аçта чăваш çынни çитнĕ, аçта чăвашла вулама, чăвашла калаçма пĕлекен çын пур—çавăнтан çырусем килеççĕ. Куллен 15—20 çыру килет. Пурте кĕнекесем ыйтаççĕ, тăван чĕлхепе кăларнă илемлĕ литература произведенийĕсене вуласшăн, чăвашла спектакльсем лартасшăн, чăвашла юрăсем юрласшăн, вĕренесшĕн. Уйрăм çынсем кăна мар, тĕрлĕ учрежденисемпе предприятисем те библиотекăсем валли кĕнекесем ярса пама ыйтаççĕ. Республика тулашĕнчи вулав çурчĕсем, колхозсенчи клубсемпе библиотекăсем почтăпа çĕршер кĕнеке ярса пама ыйтаççĕ.

«Книга-почтой» уйрăмра ĕçлекенсем почтăпа кĕнекесем яма посылка тăваççĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла) уйрăм заведующийĕ К. И. Васильева тата упаковщица Л. М. Филиппова.

Г. ЗИНЬКОВ фотоўкерчĕкĕ.

«Книга-почтой» уйрăмĕнче ĕçлекенсем кашнин ыйтăвне пурнăçлама тăрăшаççĕ. Ыйтнă кĕнекесене шыраса тупса çийĕнчех ярса параççĕ. Кĕнекепе пĕрле çыру каять. Унта юлашки вăхăтра мĕнле кĕнекесем пичетленсе тухнине, хăшпĕр чухне вĕсен кĕске содержанийĕ çинчен те çырса пĕлтереççĕ. Вара посылка илнĕ çынсем каллех çĕнĕ заказ пама васкаççĕ, çĕнĕ кĕнекесем ыйтаççĕ. Ик-виçĕ çул хушши тăтăшах кĕнеке çыrăнса илекенсем те сахал мар. Вĕсем яланхи подписчиксем шутланаççĕ.

Почтăпа кĕнеке ярса паракан уйрăм пĕлтĕр кашни уйăхра вăтамран 200 посылка ытла янă. Хăш-пĕр уйăхсенче задание 170—185-шер процент пурнăçланă. Çулталăкра 66.500 тенкĕлĕх кĕнеке ярса парса, задание 105 процент тултарнă.

Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене, чăвашла куçарса пичетлесе кăларнă хыççăн, кĕнеке ыйтакансен хисепĕ татах та ўснĕ. Çĕнĕ çултанпа республика тулашĕнчи тĕрлĕ вырăнсене 100 ытла посылка янă, уйăхри задание 155 процент ытла тултарнă.

— Халĕ И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă генилле произведенине чăвашла пичетлесе кăларсанах ярса пама ыйтса çырусем килеççĕ. Пурте кĕтеççĕ,—тет заведующи К. Васильева юлташ.

«Книга-почтой» уйрăмĕ халăх хушшине, уйрăмах республика тулашĕнчи чăвашсем хушшине кĕнекесем сарас тĕлĕшпе пахха та пысăк ĕç тăвать.

И. МИНИН.

Заочно вĕренеççĕ

ИЕПРЕС. Районти партипе совет организацийĕсенче ĕçлекенсем чылайăшĕ институтсенче заочно вĕренсе хăйсен пĕлĕвне ўстереççĕ.

Районти «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçат редакторĕ Н. Павлов, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Нина Семенова Канашри учительски институтра, КПСС райкомĕн библиотекин заведующийĕ К. Афанасьев, КПСС райкомĕн секретарĕ М. Дмитриев Шупашкарти педагогика институтĕнче заочно вĕренеççĕ.

Г. РУСАНОВ.

Кĕскен

★ ЧКАЛОВСКИ. Патăръелĕнчи МТС çумĕнче шоферсем вĕрентсе хатĕрлемелли виçĕ уйăхлăх курс ĕçлеме пуçларĕ. Унта 30 çамрăк вĕренет. Занятисене МТС-ри опытлă шофер-механиксем ирттереççĕ.

И. МАТРОСОВ.

★ СОВЕТСКИ. Çак кунсенче республикăри лекторсен бюровĕн лекторĕ Г. Орешников юлташ районти чылай колхозсенче «Этем мĕнле пулса кайнă» темăпа темиçе лекци вуласа пачĕ. Лекцие уйрăмах район центрĕнче, Килтĕшре, Мăн Ямашра, Николаевскинче нумайăн итленĕ.

Колхозниксем çутçанталăкри явленисем, наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен лекцисем вулама ыйтаççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

★ ЭЛЕК. Сухари фельдшер пунктĕнче Н. Кошелева юлташ фельдшерица пулса ĕçлет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пыма тăрăшать. Колхозниксем хушшинче санитари пропагандине чылай вăйлатнă. Килĕрен çўресе тата докладсемпе калаçусем ирттерсе пур çĕрте те тасалăхпа йĕркелĕх тума пулăшнă. Кирлĕ чухне çийĕнчех пулăшу панăшăн ăна колхозниксем питĕ хисеплеççĕ.

И. БЕЛОВ.

Пĕлтерни

Февралĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотеки çуртĕнче пĕрремĕшпе иккĕмĕш çул вĕренмелли политшкулсен тата И. В. Сталин юлташăн кĕске биографине вĕренмелли кружоксен руководителĕсем валли «ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен партин XIX-мĕш съездне туса панă отчетлă доклад» тăрăх семинарсем пулаççĕ.

Семинарсен руководителĕсем: Н. А. Смирнова, А. П. Николаев, П. Г. Григорьев юлташсем.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 7-мĕшĕнче, вырăсла спектакль

«НЕВОЛЬНИЦЫ»

Ыран, февралĕн 8-мĕшĕнче, кăнтăрла та, каçхине те вырăсла спектакль

«БОГАТЫРСКИЙ СКАЗ»

Кăнтăрлахи спектакльсем 12 сехетре, каçхи спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01283 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.